# Ирĕклĕх ятлă ялта... пĕчченех тенĕ пек пурăнать хĕрарăм • 4 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

8(826) №, 2014, пуш, 1

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

**"Çĕнтерӳ" мемориал комплексĕнчи Амăшĕн сăнарне Мускав скульпторĕ Анфиса Смелова çине пăхса калăпланă.** 2 стр.

**Хула кăна мар, ял та вырăсланать. Чăвашлăх утравне кам çăлса хăварĕ?** 3 стр.

**ÇÇХПИ инспекторĕсем сĕмсĕр пулĕ тенĕччĕ...** 5 стр.

**Пуш уйăхĕ – пахчаçăн хĕрӳ вăхăчĕ.** 8 стр.

**Çурхи шывпа юхса кайнă телей.** 9 стр.

**Ларма хĕр...** 10 стр.



4 стр.

## Класри линолеум хăма çурăçтармасть-çке чунăма

**Çамрăксем шкула ĕçлеме каясшăн мар. «Пиçсе» çитнĕ çак ыйтăва ахальтен мар Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăй хускатрĕ, паян-ыран алла диплом илес учительсемпе тата тин кăна вĕрентӳ ĕçне пикеннисемпе тĕл пулчĕ. Кун пирки «ЧХ» иртнĕ номерĕнче тĕплĕн çырса кăтартнăччĕ. Шупашкарти Çĕньял шкулĕнче иккĕмĕш çул ĕçлекен Оксана Ильина ĕç условийĕсем тивĕçтерменни пирки калаçу пуçарчĕ тĕл пулура. Акăлчан чĕлхи вĕрентекенскерĕн линолеум хăмапа усă курма тивет, унта вара пурă та йĕркеллĕ çырмасть.**

**20 çул каялла шкулта вĕренни аса килчĕ. Шупашкар районĕнчи Ишек шкулĕнчи акăлчан чĕлхи пӳлĕмĕ «районта чи лайăххи» ята тивĕçнĕччĕ. Учитель урокра темĕн тĕрлĕ технологипе усă куратчĕ. Хальхи ĕмĕрте вĕсемсĕр ĕçлеме май та çук пек туйăнать... «Пурлăх никĕсĕ тĕлĕшпе Çĕньял шкулĕ чăнах та йывăр лару-тăрура-ши?» – çак ыйту кăсăклантарни çула тухма хистерĕ.**

### Ырă сăмах каламарĕç

Шупашкарти «Аэропорт» чарăнăвĕнче Çĕньяла çитме автобус кĕтнĕ май çамрăк хĕрарăмпа калаçу пуçартăм. 4-5 çулти хĕр пĕрчипеччĕ вăл. Сăмах шкул çине куçрĕ. «Манăн шăллăм 9-мĕш класс хыççăн хулана вĕренме килчĕ. Халĕ 10-мĕш класра 3 ача тăрса юлчĕ, 13-шĕ шкултан кайрĕç. Учительсем ачасене экзамен тытаймассипе хăратаççĕ, кӳрентереççĕ. Тĕпренчĕкĕме çав шкула ярас килмест, хуланах вырнаçтарма тăрăшăп», – терĕ çулташ. Автобус килчĕ те, сăмах вĕçне-хĕрне тухаймарăмăр.

Çĕньялта тепĕр хĕрарăмран çул кăтартма ыйтрăм, мĕн çăмăлпа çӳренине те пĕлтертĕм. «Хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ ачисене мĕншĕн Шупашкара илсе çӳренине те тĕпчĕр», – тĕлĕнтерчĕ çав хĕрарăм.

Фойере никам та çук, вахтер постне те асăрхамарăм. Урок вăхăчĕ. Коридор тăрăх пушмак кĕллипе шаклаттарса утсан та пĕрремĕш хутра мана чĕрĕ пĕр чун та асăрхамарĕ. Шкулне йăтса тухса кайсан та сисмĕç кусем...

### Чи лайăх шкулсенчен пĕри

Иккĕмĕш хута хăпартăм, тăхтавччен вулавăша кĕме шухăшланăччĕ те – алăкĕ питĕрĕнчĕк. Кивĕ, хăш-пĕр çĕрте пуш-пушă, тепĕр çĕрте «Здравствуй, зима!» тесе çырнă стендсене пăхса çӳрерĕм. Шкул тăрри юрăхсăра тухнă пулас – стенасем тăрăх шыв аннă... Коридор тепĕр вĕçĕнче тăвата арçынна курах кайрăм. Кур-ха: çынсем те пур иккен кунта! Шкул директорĕн çумĕ Николай Эшмеев Шупашкар район администраци пуçлăхне Георгий Егорова, информатизаципе компьютеризаци уйрăмĕн ертӳçине Дмитрий Жаворонкина, ял тăрăх администраци ертӳçине Евгений Зубкова темĕн ăнлантарать, кăтартать. Пырса сывлăх сунтăм. «Районти чи лайăх шкулсенчен пĕринче эсир. Физкультура урокĕнче пултăмăр, ачасем авă йĕлтĕрпе ярăнаççĕ. Пушар хăрушсăрлăх енĕпе те кунта ĕçе лайăх тытса пыраççĕ...» – палăртрĕ район администраци ертӳçи.

## «Çамрăксен хаçачĕ» – Интернетра

Хисеплĕ вулакансем! Пуш уйăхĕнчен тытăнса «Хыпар» Издательство çурчĕн сайтĕнче «Çамрăксен хаçачĕн» номерĕсене уççăнах вулама май пулмĕ. Туллин паллашас тесен унăн электрон версине çырăнса илмелле. Пуш-çĕртме уйăхĕсенче **«Çамрăксен хаçачĕн» электрон вариантне электрон почтăпа илсе тăмалли хак – 50 тенкĕ.** Кăларăма тĕрлĕ мелпе çырăнма пулать. Кун пирки тĕплĕнрех hypar.ru сайтра пĕлме пултаратăр.

### ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 01.03 | - 4 | - 9 |
| 02.03 | - 3 | - 6 |
| 03.03 | - 5 | - 9 |
| 04.03 | - 5 | - 5 |
| 05.03 | - 2 | - 9 |
| 06.03 | - 3 | - 9 |
| 07.03 | - 1 | - 7 |

*Юнашар ларăн – юлташ пулăн, хуша ларăн – хурăнташ пулăн.*

Каларăш.

**"Чăваш хĕрарăмне" çитес çур çуллăха пуш уйăхĕн вĕçĕччен хальхи хакпа çырăнтараççĕ!**



АС ТĂВĂМ

# Юрă сăмахĕсем манăçсан та... Анфиса Смелова аса килет

**Шупашкарти «Çĕнтерӳ» мемориал комплексĕнчи Çар Мухтавĕн монуменчĕ патĕнче тăратăп. Ăна 1980 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче уçнă. Амăшĕпе салтак сăнарĕ урлă Тăван çĕр-шыв Аслă вăрçи вăхăтĕнчи паттăрлăха кăтартнă. Çакăнтах сӳнми çулăм ялкăшать. Çамрăк мăшăр çĕнтерӳшĕн вăй-халне, пурнăçне шеллемен йăх-несĕле хисеплесе туйра палăк умне чечек çыххисем хурасси йăлара. Монумент çинчи амăшĕн сăнарне Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисткине Анфиса Смеловăна пăхса ăсталанине пĕлетĕр-и? Ун чухне скульптор ятарласа Мускава чĕнсе илнĕ ăна. Çи-пуçа театртан тата тавра пĕлӳ музейĕнчен илнĕ.**



**«Пĕрмай çĕклесе тăнăран алă ывăннăччĕ...» – каласа кăтартнă вăл кайран ĕçтешĕсене. РФ халăх артистки Нина Яковлева çав вăхăта аса илтерсе паллă çак вырăнта ăна сăн ӳкерме палăртнă, анчах шухăшланине пурнăçа кĕртме ĕлкĕреймен. Анфиса Смеловăн кун-çулĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Пурăннă пулсан çак кунсенче 75 çул тултаратчĕ вăл.**

**Етĕрне районĕнчи Ирçе хĕрĕ А.В.Луначарский ячĕллĕ Мускав патшалăх театр искусствин институтĕнче вĕреннĕ, унтан К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче 33 çул ĕçленĕ. Унăн сăнарĕсем – Нонка Амăшĕ /«Нонка юратăвĕ», Г.Терентьев/, Зана /«Вĕр, вăштăр çил», Я.Райнис/, Лисук /«Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт», В.Яковлев/, Маруç /«Юратупа кавăн», И.Стаднюк/, Марийка /«Салтак арăмĕ», Н.Анкилов/, Валерия /«Хĕвел ӳкнĕ хырлăх», Л.Моисеев/, Улемпи /«Салтак амăшĕ», В.Синичкин/, Пинерпи /«Айтар», П.Осипов/... – яланлăхах куракансен асĕнче юлĕç. Сăмах май, вăл Николай Айзман ĕçĕ тăрăх лартнă «Кай, кай Ивана» спектакльти Вĕçелис сăнарĕпе 24 çул /!/ сцена çине тухнă. Çак ĕçпе артистсем нумай хулапа яла çитсе килнĕ. Кирек ăçта та тăвăллăн алă çупса йышăннă ăна.**

**Тăван театрта ун ячĕпе стенд йĕркеленĕ. «Çавна курмасăр ун çинчен статья çырма пулать-и вара?» – терĕç ят-сум çĕнсе илнĕ тантăшĕсем. Чăнах, çакăнти сăн ӳкерчĕксем урлă Анфиса Смеловăн пултарулăх çулне йĕрлеме пулать. Чун витĕр кăларнă нумай сăнар куç умне тухса тăрать.**

## Пултарулăх çулĕн пуçламăшĕ

Артистсем хатĕрлекен тăрăхра çуралнă Анфиса Ивановна. Вăл çитĕннĕ вăхăтра Ирçе ялĕнче драма кружокĕ ĕçленĕ. Пуçламăш классен вĕрентекенĕ Петр Васильев сцена çине тĕрлĕ спектакль кăларма вăй çитернĕ. «Айтар», «Судра», «Кай, кай Ивана»... ĕçсемпе артистсем куракансене тĕлĕнтернĕ те, тыткăнланă та. Анфиса Смеловăпа Анатолий Большаков хăйсен пурнăçне театрпа çыхăнтарнă. Григорий Петров та, Галина Мурзина та, Станислав Яковлев та... ятарлă пĕлӳ илнĕ пулсассăн ним мар пысăк сцена çине тухма пултарнă. Вĕсем хăйсемех çи-пуç çĕленĕ, декораци хатĕрленĕ.

1964 çулта Петр Васильев ертсе пыракан драма кружокне халăх театрĕ ят пама палăртнă. Анчах режиссер хытах чирленĕ те хаклавçăсене чĕнсе илеймен. Кайран, Петр Васильевич пурнăçран уйрăлсан та, Ирçесем нумай спектакль кăтартнă.

## Ирçе ялĕн мухтавĕ

Çав тăрăхри тавра пĕлӳ музейĕ ятлă-сумлă ентешсен кун-çулĕпе паллаштарать. Унта Анфиса Ивановна çинчен çырни те пур. «Шупашкарта пурăннă чухне драма театрĕнчен тухма пĕлмен. Качча тухнă ялта Анфиса Смеловăна курсан мĕнешкел савăннăччĕ. Шкула тĕл пулăва чĕннĕ ăна. Пĕрре чăваш çи-пуçĕн, тĕрĕ-эрешĕн хăйне евĕрлĕхĕ çинчен каласа кăтартнăччĕ вăл», – аса илет музей йĕркелӳçи, чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕ Зоя Никифорова. Тăван тăрăх çинчен энциклопеди кăларма тĕв тунăскер артисткăпа çыхăннă кашни пулăма асра тытать. «Ялта пурăнас килет. Кунта сывлăш мĕнешкел уçă», – тетчĕ», – палăртать Зоя Нестеровна. Анфиса Смелова тăван килĕнче тĕрлĕ тĕслĕ чечек çитĕнтернĕ. Çак илемпе иртен-çӳрен чарăнса тăрсах киленнĕ.

Ирçесем юрлама-ташлама ăста. Ушкăнпа концерт йĕркелесе куракансен кăмăлне тупаççĕ вĕсем. Хăйсен пултарулăхĕпе паллаштармашкăн ăçта кăна çитмен-ши вырăнти артистсем?

«Анфиса Смеловăн аппăшĕ Манефа Ивановна та уçă саслăччĕ. Сцена çинче юрлани уншăн та чун киленĕçĕ пулнă», – сӳтĕлет аса илӳ çăмхи. Пĕрре 3-мĕш бригадăра пурăнакан юрă-ташă ăстисем сумлă ентешне юбилейпе саламламашкăн Шупашкара килсе çитнĕ.

## Парне пама юратнă

Анфиса Ивановна 4 ачаллă çемьере çитĕннĕ. Вăл нихăçан та пуç усса ларман. Çак тĕнчене килнĕшĕн чунран савăнма пĕлнĕ.

70 çулти юбилейне, тĕслĕхрен, артистка пысăк йышпа паллă тунă. Дискра çырăнса юлнă хăш-пĕр самант çинче чарăнса тăрас килет. «Манăн артиста вĕренмешкĕн Мускава каймалла пулса тухрĕ. Нухратсăр çула тухаймăн. «Артист ĕçĕ – ĕç-и вăл?» – терĕ атте-анне. Вĕсем мана укçа памарĕç. Эпĕ аптăраса тăмарăм, вĕрентекенрен Евгения Васильевнăран 25 тенкĕ кивçен илтĕм. Килти пĕтĕм укçана пĕрене хушшинче упратчĕç. Никамран ыйтмасăрах 50 тенкĕ илсе чикрĕм. Анне çакна сисрĕ те шăпăрпа ăса вĕрентрĕ мана», – пытармасть Анфиса Ивановна. Çапах кайран ашшĕпе амăшĕн кăмăлĕ çемçелнĕ. Пил парсах Мускава ăсатнă ăна.

Аппăшĕн пурнăçĕ çинчен шăллĕне Николай Ивановича каласартăм. «Анфиса 16 çул тултарсан тин çуралнă эпĕ. Аслисен пĕчĕккине пăхмалла пулнă ĕнтĕ. Манефăпа иккĕшĕн улаха тухас килнĕ. Хăйсем каласа кăтартнă



● ВАСИЛИСА /АНФИСА СМЕЛОВА/. /«ВАСИЛИСА КИН КĔРТЕТ»/.

тăрăх – мана хуçалăх сумкине чиксе пĕрле илсе кайнă», – чăнах, пĕрре те аптăраса тăман аппăшĕсем. Кайран пулас артистка Мускавран парне илсе килнине аса илчĕ вăл. Ун чухне хĕм кăларакан самолет ялта урăх никамăн та пулман. Гастрольсенчен асăнмалăх мĕн чухлĕ япала илсе килнĕ тата. Унăн парнисене – савăтсапаран пуçласа куллен усă курмалли техника таранччченех – типтерлĕ тытаççĕ Андреевсем.

Николай Иванович 35 çулта мăшăрланнă. Шкул хыççăн Шупашкарта аппăшĕпе пĕрле пурăннă вăл. «Анфиса Ивановна шăллĕне вун-вун кĕпе парнелени тĕлĕнтернĕччĕ мана», – калаçăва хутшăнать кинĕ Нина Николаевна. Артистка кулленхи пурнăçра нумай пулăшса пынă ăна.

Анфиса Смелова çĕр ĕçне юратнă. Кăмпа вырăнĕсене лайăх пĕлнĕ. Кашни çулах хĕлĕпе çимелĕх помидорпа хĕрен хутăшĕ хатĕрленĕ вăл. Тăванĕсем çаплипех унăн рецепчĕпе усă кураççĕ. Сăр хĕрринчи ялта çуралнăскер пулă çиме юратнă. Хăй те пушă вăхăт тупăнсанах вăлтапа шыв хĕрринче ларнă.

Ашшĕпе амăшĕ Иван Андреевичпа Наталья Никитична пĕр ялтан тепĕр яла çитекен артистсене хапăлласа кĕтсе илнĕ. Сĕтел хатĕрленĕ, мунча хутнă.

Анфиса Ивановна пĕр хĕр çуратса çитĕнтернĕ. Татьяна та спектакльсенчи ача сăнарĕсене калăпланă. Кукамăшĕ виçĕ мăнукне те ура çине тăма пулăшнă.

## Йыш çынни

ЧАССР тава тивĕçлĕ артистки çинчен ĕçтешĕсем каласа кăтартаççĕ.

**Валерий ЯКОВЛЕВ, СССР халăх артисчĕ, тĕп режиссер:**

– Пултаруллăччĕ, хĕрӳллĕччĕ, тăрăшуллăччĕ Анфиса Ивановна. Мускавра хавхаланса вĕренчĕ. Камитре те, драмăра та вылянă. Пирĕн репертуарта юрă-ташăллă спектакль нумай. Вĕсенче кашнинчех Анфиса Ивановнăна роль панă. Турă ăна тĕлĕнмелле сасă парнеленипе çыхăнтарас килет çакна. Вăл хăватлă кăна мар, тĕрĕс юрлама пĕлетчĕ, ыттисене ертсе пыратчĕ.

«Салтак арăмĕ» спектакльте Марийкăна вылятчĕ вăл. Çĕпĕр авторĕ çак ĕçе хăй те килсе курнăччĕ. Тĕп роле калăплакана çав тери килĕштернĕччĕ хăна. Ун чухне ырă та ăшă сăмахсем каласа хавхалантарса хăварнăччĕ.

Сцена çинче ыттисене хĕртсе яма пултарнипе палăрса тăратчĕ вăл. Çамрăксем те унран нумай вĕреннĕ. Тивĕçлĕ канăва тухсан театра тăтăш килетчĕ. Вăл нихăçан та йышран айккинче юлман.

Малтан театрта 4 сасăпа юрлаттăмăр. Çур çĕр иртсен те гастрольтен юрă шăрантарса таврăнаттăмăр. Кашнинчех Анфиса Ивановна пуçласа яратчĕ. Чăвашла та, вырăсла та çав тери хитре юрлатчĕ.

**Нина ГРИГОРЬЕВА, РФ халăх артистки:**

– Мускаврах пĕр çемьери пек пурăннă. Вăл, манран çур çул маларах вĕренме кайнăскер, алăран çавăтсах çӳретчĕ. Хăйĕнчен ниçта та хăварман. «Лашипе тихи» тетчĕç пирĕн пирки. Пĕррехинче иксĕмĕр пахалăхлă та хитре пĕрешкел сумка та илнĕччĕ.

Гастрольте арçынсемпе танах волейболла, футболла вылятчĕ е пулă тытатчĕ. Вăл вăрçăннине те, нăйкăшнине те курман.

Пĕрре грим пӳлĕмне кĕрсен укçа выртнине курах кайрăм. Тӳрех Анфиса патне шăнкăравларăм. Вăл укçана нуски ăшне чикнĕ пулнă. Улăштарса тăхăннă вăхăтра нухрат урайне тухса ӳкнĕ.

**Нина ЯКОВЛЕВА, РФ халăх артистки:**

– Анфиса çӳллĕччĕ, яштакаччĕ, тĕлĕнмелле илемлĕччĕ. Ырăпа кăна асра юлнă вăл.

Туслă пурăннă. 70 çулти юбилейĕнчи сăн ӳкерчĕксемшĕн хĕпĕртенĕччĕ тантăшăм.

Халĕ гастрольтен таврăннă вăхăтра юрă пуçлатпăр та... хăш чухне сăмахĕсене аса илейместпĕр. «Эх, Анфиса çук çав пирĕн йышра», – калаçатпăр пăшăрханса. Вăл сыпăнтарса яратчĕ.

**Чăваш халăх артистки Анна Кутузова** шурă шупăрлă, шурă тутăрлă Анфиса Смеловăна Мускава каякан пуйăсра пĕрремĕш хут курнă. Чăваш хĕрĕн хитрелĕхĕ ăна çеç мар, ыттисене те тыткăнланă.

**РФ тава тивĕçлĕ артисчĕ Владимир Семенов** амăшĕ юрланă юрăсене пĕлнĕшĕн çав тери хисепленĕ Анфиса Ивановнăна.

**Марина ТУМАЛАНОВА хатĕрленĕ.**



● ВАЛЕРИЯ /АНФИСА СМЕЛОВА/. /«ХĔВЕЛ ӲКНĔ ХЫРЛĂХ»/.





САМАХ ПАРĂР-ХА

# Чăвашсем акăлчансемпе яппунсене хыçа хăварнă

Марина ТУМАЛАНОВА

Ача чухне шкулта чăваш чĕлхипе тата литературипе викторина йĕркеленĕччĕ. Эпир, кĕçĕннисем, аслисене хыçа хăварма ăс çитерни çаплипех манăçман. Вĕсем уйăх ячĕсене чăвашла пĕлмен. Шăпах çак ыйтури тĕрĕс кашни хуравшăн пĕрер балл хушса панăччĕ пире. Вĕренни, чăн та, çăкăр ыйтмасть, хăй тăрантарать. Ун чухнех чăваш çыравçисемпе сăвăçисен ĕçĕсене тишкерсе вулани халĕ ĕçре пулăшса пырать. Юратнă авторсен кашни кĕнекине чун кĕтет.

Ĕçпе çула тухсассăн тĕрлĕ ӳсĕмри çынсемпе тĕл пулатпăр, вĕсен пурнăçĕпе, шухăш-кăмăлĕпе кăсăкланатпăр. Улшăннă ял тăрăхĕ: çамрăк ăру чăвашла калаçасшăн мар. Ача садĕнче те, шкулта та тăван чĕлхе илтĕнменпе пĕрех. Çакна кашни çул çӳревре курса тĕлĕнетĕп. "Шкулта наци программипе вĕрентеççĕ. Пуçламăш класра пĕлӳ илекен мăнукшăн чăвашла калаçасси ют чĕлхене ăса хывнипе танах", – пăшăрханса калаçать кукамăшĕ. Чăнах, çакна хам та курса ĕнентĕм. Мăнукĕпе чăвашла кăна калаçĕччĕ хĕрарăм, анчах арçын ача ашшĕпе амăшĕ патĕнче пурăнать, вĕсем патне сайра хутра килет.

Чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕсем те ачасен пĕлĕвĕпе кăмăлсăр. "Урокра ыйтсан тĕп шухăша уçса памашкăн сăмах тупаймаççĕ. Килти ĕç пирки сăмах тапратсан мана та вырăсла калаçтарасшăн. Страница номерне чăвашла каланине ăнланмаççĕ имĕш", – тет пĕр педагог. Хуларан яла вĕренме пыман вĕт вĕсем. Чăвашла калаçакан ашшĕ-амăшĕн çунатти айĕнче ӳснĕ.

Ялти ватăсем те ачасемпе вырăсла пуплеççĕ. Çамрăксем тăван чĕлхене ăша хывманни, йăх-несĕл культури, йăли-йĕрки манăçса пыни пăшăрхантармасть-ши вĕсене? Пĕрре командировкăна кайсан транспорт чарăнăвĕнче автобус кĕтсе лараттăм. Унччен те пулмарĕ, аслашшĕсемпе асламăшĕсем, кукашшĕсемпе кукамăшĕсем мăнукĕсене ача садĕнчен илсе тухрĕç. Эх, шăкăлтаттарса вырăсла калаçса иртсе кайрĕç. Акă вăл – паянхи ялăн сăн-сăпачĕ. Канашлусене вырăсла ирттерни пирки асăнмастăп та. Çакна пурте тахçанах хăнăхнă ĕнтĕ.

Çав вăхăтрах тĕнче шайĕнчи ырă хыпар-хăнар савăнтарать те, тĕлĕнтерет те. Иртнĕ çул вĕçĕнче, тĕслĕхрен, Ялтăри чĕлхесен фестивалĕнче чăвашсем çĕнтернĕ. Тĕплĕнрех калас тăк – унта 20 чĕлхе хăйне евĕрлĕхĕ çинчен каласа кăтартнă. Çакнашкал тĕл пулу халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетет. Ку мероприятие Севастопольти культурăпа наци обществин хастарĕсем тата И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ вĕрентекенĕсем тăрăшса хатĕрленни харама кайман. Чăвашсем акăлчансене те, яппунсене те хыçа хăварма вăй çитернĕ. Çакă мăнаçланмалли сăлтав мар-и вара?

Нумаях пулмасть Мурманскри чăваш наци культурин автономийĕ тавра пĕлӳ музейĕнче граждан вăрçин паллă комдивĕ Василий Чапаев çуралнăранпа 127 çул çитнине халалласа ăслăлăх-практика конференцийĕ ирттернĕ. Унта унăн пурнăçĕпе çемйи çинчен калаçнă.

Йăхташăмăрсем чăвашлăхпа çыхăннă çакнашкал нумай уяв йĕркелени, паллах, хăпартлантарать. Апла тăк вĕсем ытти халăх хушшинче çухалса кайман.

Юлашкинчен кăсăклă пĕр пулăм пирки çырса кăтартасшăн. Иккĕмĕш сыпăкри шăллămпа çыхăну татăлнăччĕ. Чăваш Республикинче çуралса ӳснĕ ашшĕ, çар горнизонĕн пуçлăхĕ, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Малтан кукка çемйипе çуралнă тăрăха çулталăкра пĕрре те пулин килсе каяканччĕ. Инкек хыççăн тăвансене çухатрăмăр. Вĕсем пĕр хуларан теприне куçнă, телефон номерĕсене улăштарнă. Юрать-ха халĕ Интернет урлă кирек кампа та çыхăнма май пур. Республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсен пурнăçĕпе кăсăкланнăран диаспора сайчĕсенчен тухманпа пĕрех. Йăлтах пĕлес килет пирĕн. Тĕрлĕ курав йĕркелеме ӳркенмеççĕ чăвашсем. Пĕр сăн ӳкерчĕкре хайхи иккĕмĕш сыпăкри шăллăма куртăм. Чăваш килçурчĕ патĕнче тăра парать. Пĕччен те мар, ывăлĕпе... Ахăртнех, чăваш юнĕ-чунĕ илсе çитернĕ ăна çав вырăна.

ОЛИМПИАДА

# Халăх асĕнче çырăнса юлнă уяв



*Иртнĕ вырсарни кун виçĕ уяв пĕрле килчĕ – Çăварни, Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунĕ тата пирĕн çĕр-шыв команди пĕрремĕш вырăн йышăнни. Спортăн пысăк уявĕ халăх асĕнче чылайлăха çырăнса юлчĕ. Пысăк çĕнтерӳ Раççей çыннисен кăмăлне çĕклерĕ.*

Нарăсăн 24-мĕшĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Путин XXII хĕллехи Олимп вăййисен чемпионĕсемпе тата призерĕсемпе тĕл пулчĕ, вĕсене патшалăх наградисем парса чысларĕ.

Раççей пĕрлештернĕ команди 13 ылтăн, 11 кĕмĕл тата 9 бронза выляса илсе пĕрремĕш вырăна тухрĕ Олимпиадăра. Çĕр-шыв ылтăн медальсен йышĕпе çеç мар, выляса илнĕ мĕн пур награда хисепĕпе те пĕрремĕш вырăнта.

Малтанхи эрнере Раççей 7-мĕшчĕ, кайран 4-мĕшне çитрĕмĕр. Чылай пăшăрхантăмăр, кулянтăмăр. «Çĕнтереймеççĕ, пултараймаççĕ пирĕннисем», – кĕрлесе тăратчĕ таврара. Шăмат кунпа вырсарни кун вара кĕтмен пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Пирĕн атлетсем нихăçан та мала тухма пултарайман çĕрте те наградăсене тивĕçрĕç. Александр Смышляев тăрăшнипех фристайлта çĕнтертĕмĕр. Вăл бронзăна тивĕçрĕ. Бобслей енĕпе Александр Зубкова тата Алексей Воеводăна çитекенни пулмарĕ те. Ахальтен мар Зубков Раççей ялавне йăтса тухма тивĕçрĕ.

Çунапа ярăнса Альберт Демченко икĕ «кĕмĕл» çĕнсе илчĕ. Вăл Олимпиадăра 7-мĕш хут Раççей чысне хӳтĕлерĕ.

Сноубордистсем питĕ савăнтарчĕç. Раççей историйĕнче кун пекки – пĕрремĕш хут. Сноуборд-кросра Николай Олюнин кĕмĕл медале тивĕçрĕ. Вик Уайлд сноубордист Олимпиадăра икĕ ылтăн медаль çĕнсе илме пултарчĕ. Паллах, мăшăрĕ те хавхалантарчĕ спортсмена. Алена Заварзина çав кун, суранне пăхмасăрах, спортăн çак тĕсĕнчех бронза илейрĕ. Вĕсем – пĕр дисциплинăра тата пĕр Олимпиадăра медальсем çĕнсе илнипе хĕллехи вăйăсен историне кĕрсе юлнă иккĕмĕш çемье.

Елена Никитина скелетонра «бронзăллă» пулчĕ. Сăмах май, спорт ку тĕсĕнче пирĕн хĕрарăмсем пĕрремĕш хут пьедестал çине хăпарса курчĕç.

Алексей Волков, Евгений Устюгов, Дмитрий Малышко, Антон Шипулин биатлонистсем эстафетăра 1-мĕш вырăн йышăнчĕç. Арçынсен команди 1988 çултанпа «ылтăн» илмен!

Хĕллехи вăйăсен юлашки кунĕнче 50 километрлă дистанцие парăнтарса пьедесталăн виçĕ картлашкине те Раççей спортсменĕсем йышăнни те историре халĕччен пулман! Чăннипех те савăнтарчĕç! Александр Легков, Максим Вылегжанин тата Илья Черноусов финиша пĕрин хыççăн тепри çитсе тĕлĕнтерчĕç.

Халĕччен шорт-трек мĕн иккенне лайăх пĕлмен пулсан малашне нихăçан та манса каймăпăр. Йăрă спортсмен Виктор Ан пĕтĕм куракан чун-чĕрине тыткăнларĕ. Вăл пьедесталăн чи çӳлти картлашки çине виçĕ хутчен хăпарчĕ. Виктор 2012 çулччен Корея Республикин чысне хӳтĕленĕ. 2012 çулта Раççей командин йышне кĕнĕ. 2006 çулта Туринра виçĕ ылтăн медаль илнĕ. Çапла майпа Ан Олимп чемпионĕн ятне иккĕмĕш хут тивĕçрĕ.

Раççей скелетонисчĕ Александр Третьяков та ырă сăмаха тивĕçлĕ. Вăл Раççей командин пухмачне тепĕр ылтăн медальпе пуянлатрĕ. Спортăн çак тĕсĕнче пирĕн çĕр-шыв спортсменĕсен хушшинче 1-мĕш вырăн йышăнакан халĕччен пулман. Ванкуверта вăл «бронзăна» тивĕçнĕччĕ.

Аделина Сотникова та çĕр-шыв историйĕнче пĕрремĕш хут «ылтăн» илчĕ. Унччен маларах спортăн çак тĕсĕнче тупăшса хĕр-хĕрарăм хушшинче пьедесталăн чи çӳлти картлашки çине никам та хăпарайман.

* * *

Ылтăн медаль çĕнсе илнĕ спортсменсене федераци бюджетĕнчен 4 миллион тенкĕ, «кĕмĕлшĕн» 2,5 миллион тенкĕ, «бронзăшăн» 1,7 миллион тенкĕ уйăрĕç.

Кĕçнерни кун Раççей премьер-министрĕ Дмитрий Медведев спортсменсене автомобильсем панă çĕре хутшăнчĕ. Паркра 44 шурă урхамах. Ылтăншăн – GL, кĕмĕлшĕн – ML, бронзăшăн – GLK модель «Мерседес-Бенц» автомобильсен уççисене пачĕç.

Аделина Сотникова фигуристка автошкула çырăнма та ĕлкĕрни, çитес вăхăтра экзамен ăнăçлă тытса водитель правине илме пултарасси пирки пĕлтерчĕ. АПШра çуралса ӳснĕ Раççей спортсменĕ Вик Уайлд та парнешĕн питĕ хĕпĕртенине пĕлтерчĕ. Унăн мăшăрĕ те çакнашкалах машинăна тивĕçнĕ. Икĕ автомобильпе мĕн тăвасси пирки хальлĕхе шухăшламанха вĕсем. «Пĕрне пирĕншĕн нумай тăрăшнă Аленăн амăшне паратпăр пуль, теприне хамăр валли хăварăпăр», – терĕ çĕнтерӳçĕ.

Кашни автомобилĕн алăкĕпе капочĕ çине Раççей пĕрлештернĕ командин тата фондăн символикине ӳкернĕ. Номер паллисем çинче – автомобиль хуçин ячĕ.

* * *

Пуш уйăхĕн 7-16-мĕшĕсенче Сочире Паралимп вăййисем иртĕç. Унта 45 çĕр-шывран 1650 ытла спортсмен хутшăнĕ.

Ытлари кун Инçет Хĕвел тухăç федераци округĕнче паралимп çулăмне çутрĕç те ĕнтĕ. Раççейри 8 федераци округĕнче 1,5 пин çын çулăм йăтса чупĕ. Эстафета тапхăрĕсенчен пĕри Аслă Британири Сток-Мандевиль хулинче иртĕ. Сток-Мандевиль Паралимп вăййисене пуçарнă çĕр-шыв шутланать.

* * *

Чăваш патшалăх филармонийĕн «Çавал» фольклорпа эстрада ансамблĕ 5 кун Сочире пулса килчĕ. Вĕсем Олимп паркĕнче иртнĕ концертсене хутшăннă. Сочи халăхĕ, спорт ăмăртăвĕсене курма килнисемпе хăнасем чăваш халăх юрри-ташшине мĕнле йышăнни кăсăклантарнăран ансамбль ертӳçипе Лилия Прокопьевăпа çыхăнтăмăр.

– Пире ăшшăн кĕтсе илчĕç. Концерт программин йĕркине хатĕрлесе хунăччĕ. Çитнĕ каçхинех сцена çине тухрăмăр. Куракана чăваш халăх юрри-ташши тыткăна илчĕ. Чăтса тăраймарĕç, пирĕнпе пĕрле вĕсем те авкаланма-хуçкаланма пуçларĕç. Халăх тăвăллăн алă çупни, пĕрле савăнни халĕ те куç умĕнчех. Ютран килнĕ хăнасене уйрăмах чăваш костюмĕсем килĕшрĕç, тыта-тыта пăхаççĕ. Кунне 2-3 вырăнта концерт йĕркелерĕмĕр. Олимп паркĕнче кăна мар, ăмăртусем хыççăн та курма килнисене хамăр юрă-ташăпа савăнтартăмăр. Хавхаланса, хаваслă кăмăлпа таврăнтăмăр Сочирен, – кăмăлтуйăмĕпе паллаштарчĕ Лилия Вавиловна.

Фольклорпа эстрада ансамблĕн артисчĕсен аккредитаци пулманран пĕр-пĕр ăмăртăва кĕрсе курма май килмен. Концертсене хутшăннă май Сочипе паллашма та вăхăт юлман. Хула, Олимп обьекчĕсене çитсе курма пĕр кун уйăрнă. Артистсем хаваспах канатпа ярăннă, уçăлса çӳренĕ. Çав вăхăтра хăшĕ-пĕри аякран та пулин ăмăрту та курайнă.

Сочирен тулли кăмăлпа таврăннă ушкăн тепĕр 4 çултан Корейăна каяс шухăш-ĕмĕтлĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**



ЖУРНАЛИСТ КУÇĔПЕ

# Класри линолеум хăма çураçтармасть-çке чунăма

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

### Акăлчан чĕлхи пӳлĕмĕнче

Шăнкăрав хыççăн акăлчан чĕлхи пӳлĕмĕн алăкĕ яри уçăлсан куç тӳрех класри хăмана хакларĕ. Кивĕ шкулсенче кун пеккине куркаланă-ха. Тӳрех пурă ярса илтĕм те хăмана шуратма пикентĕм. Йĕркеллех çырать-çке... «Хăюллă эсир, Республика ертӳçи умĕнче хăвăр ыйтăва уççăнах пĕлтертĕр», – сăмах пуçартăмăр Оксана Ильинапа.

– Мĕнрен хăрамалла манăн? Эпĕ нимĕн япăххи те туман-çке... Эпĕ кунта иккĕмĕш çул ĕнтĕ. Килнĕренпех хăма улăштарма, класра юсав ĕçĕсем ирттерме ыйтатăп. Проектор та кунсеренех кирлĕ урокра. Ытти учительтен ыйтмалла терĕç... Хатĕре ачасем ăнсăртран ӳкермелле мар вырнаçтармалла, унпа аппаланса вăхăт иртет. Тата халĕ проектора мачча çумне çирĕплетсе хураççĕ те ăна пĕр вырăнтан тепĕр çĕре куçарма май та çук. Пĕр вăхăт эпĕ Çĕрпӳ районĕнчи Чиричкасси шкулĕнче ĕçленĕччĕ, унта условисем чылай лайăххахчĕ, – уçăмлатать Етĕрне районĕнчи Кăкшăмра çуралса ӳснĕ пике.

– Пурă чиперех çырать-çке, – хăма ыйтăвĕ çав-çавах канăç памарĕ мана.

– Хальхинче лайăххи лекрĕ пулас...

### Кĕçĕн класра

Çĕньял шкулĕнче пурĕ – 19 учитель, вĕсенчен 4-шĕ çамрăксем, тивĕçлĕ канурисем – 3-ĕн. Пĕрремĕш классене Алена Сапожникова, пĕлтĕр кăна диплом илнĕскере, шанса панă. Унпа та паллашрăмăр. Вăл Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Березовкăран. Ĕç вырăнĕ хăйне йăлтах тивĕçтернине палăртать хĕр. Пĕлтĕр кăна шкула «Вĕренӳ» наци программипе килĕшӳллĕн çĕнĕ технологисен икĕ комплекчĕ çитнĕ. Алена Олеговнăн класĕнче проектор та пур, хăма та линолеумран мар. Интернет çукки кăна пăшăрхантарать пикене.

### Çамрăксене хавхалантармаллах

Ольга Васильева та профессири пĕрремĕш утăмĕсене Çĕньял шкулĕнче пуçланă, биологи вĕрентет, çав вăхăтрах – социаллă педагог. 10-мĕш класпа ĕçлетчĕ вăл. Парта хушшинче – виçĕ вĕренекен çеç. /«Чăрăнура тăнă леш хĕрарăм тĕрĕсех каланă-çке», – мĕлтлетрĕ шухăш/. Класра электрон хăмапа усă кураççĕ, унта пурăпа мар, маркерпа çыраççĕ. Пирĕн вăхăтра унашкалли пулман та, экран çине урок теми те, ӳкерчĕк те тухса тăнине курса тĕлĕнтĕм.

Пĕр шкултах çамрăк вĕрентекенсем валли – тĕрлĕ условисем... Шкул директорĕн çумĕпе Николай Эшмеевпа калаçу пуçартăмăр.

– Виçĕ класра кăна киввине улăштарма ĕлкĕреймен. Çĕннисене туянса хунă ĕнтĕ, вырнаçтармалли кăна юлнă. Йăлтах харăс туянма укçа-тенкĕ çитмест. Сăмахран, географи, истори карттисем кирлĕ пире, мĕн кирлине кăçал та заявка парăпăр. Çапах та çулсеренех пурлăх никĕсне тĕреклетме тăрăшатпăр, – палăртрĕ директор çумĕ.

Çамрăксене коллектив хапăлласа йышăннине, вĕсене хавхалантарма район бюджетĕнчен шалу çумне кашни уйăхрах 1,5 пин тенкĕ хушса тӳленине, çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмашкăн черете тăратнине те палăртрĕ вăл.

Çамрăк учительсемпе калаçнă май вĕсем пурте Шупашкарта хваттер тара илсе пурăннине пĕлтĕм.

– Çул çӳремешкĕн кунне 60 тенкĕ кирлĕ, – шутласах кăтартрĕ Ольга Васильева биолог. «Республикăри вĕрентекенĕн вăтам шалăвĕ 20 пин тенке çывхарать», – теççĕ-ха, анчах та тин кăна шкула ура ярса пуснисем çак укçана тĕлĕкре кăна кураççĕ пулĕ.

Ĕçри вак-тĕвеке татса парайманшăн специалиста çухатасран шикленмеççĕ-ши ку шкулта? Шкул çамрăксене илĕртменнин сăлтавĕсене Республика Пуçлăхĕ хăй тĕпченĕ вăхăтра кадр ыйтăвне çивĕчлетес марччĕ Çĕньялсен.

**Юлашкинчен калани.** «Юнашарах шкул пур çĕртех ачасем мĕншĕн хулана çӳренине те тĕпчĕр», – тенĕрен ку ыйтупа та кăсăклантăм. Ялти ача садĕнчен пĕлтĕр 19 пепке тухнă, Çĕньял шкулне 11-ĕн пынă, 5-шĕ хулана кайнă. «Хăшĕ-пĕри пирĕн ялта прописккăра тăрать, хăйсем хулара пурăнаççĕ. Ачисене Шупашкара садике вырнаçтарайман пирки кунта çӳрерĕç, вĕренме хуланах таврăнчĕç», – сăлтавне уçăмлатрĕ Александр Захаров директор.




**Алина ИЗМАН.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

ÇУЛ ÇӲРЕВ



# Ирĕклĕхре...

**Çĕрпӳ районĕнчи Апакасси ял тăрăхне кĕрекен Ирĕклĕх выççăлккинче пĕтĕмпе те виçĕ кил кăна паян. 1921 çулта çак таврари тĕрлĕ ялти чăвашсем ирĕклĕх шыраса куçса ларнă кунта. Коммуна Уйкас ял Канашне кĕнĕ ун чухне. Тăхăр çултан тĕпрен саланса кайнă. Тепĕр пилĕк çултан асăннă уйрăм хуçалăха тата коммунарсене «Прожектор» колхозпа пĕрлештереççĕ. 1926 çулти çырав тăрăх коммунăра пĕтĕмпе 9 кил пулнă. Унта сакăр арçынпа вун икĕ хĕрарăм çеç пурăннă.**

Тĕп ялтан аякра, тĕттĕм кĕтесре вырнаçнă Ирĕклĕх выççăлккинче паянхи кун камсем, мĕнле пурăнни тахçанах питĕ кăсăклантаратчĕ. «Унта кайма хĕллехи вăхăтра çул та çук» тени те çитсе курма чăрмантараймарĕ.

Апакасси ял тăрăхне автобус çӳрет. Ирĕклĕх выççăлккине вара тепĕр виçĕ çухрăм çуран – вăрман витĕр – кăна кайма пулать иккен. Ирĕксĕрех ял тăрăхĕнче тăрăшакансене чăрмантарма тиврĕ. Корреспондента çул кăтартма никамăн та кăмăл çукки палăрчĕ. Вырăнтисем вăрманпа утса ывăннă курăнать. Усă сывлăшра пĕрле утма аранах ӳкĕте кĕртрĕм хайхисене. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.Пермяков палăртнă çĕре çитсе килме шкула йĕлтĕрсем саккас пачĕ. Ку таврара тата никамăн та лаша тавраш çук. Çуна кӳлсе Ирĕклĕхе хăвăрт кăна вĕçтерсе килме пулатчĕ-ха. Культура çурчĕн ертӳçипе Алина Максимовăпа тата Эмилия Яковлева специалист-экспертпа юлашкинчен йĕлтĕрсĕрех кайма тĕв турăмăр. /Çула кам та пулин вилсен çăва çине кайма кăна уçаççĕ иккен/.

Вăрманта вара питĕ тӳлек. Сывлăшĕ калама çук усă. Ансăр сукмакпа утма кăна кансĕртерех, юр çемçе пулнăран вырăн-вырăн ура путса анса каять. Йĕп-йĕпе тара ӳкрĕмĕр. Ял тăрăхĕн ĕçченĕсем, манпа пĕрле пĕр чĕнми утакансскерсем: «Эх, ку хĕр ача мĕн шырама тухнă-ши?» – тесе, тен, тарăхрĕç те пуль-ха. Каçарччăрах ĕнтĕ. Курас килни пĕтерет-çке... Вăрмантан аран-аран тухса пĕтрĕмĕр. Малалла вара маяк çулпа каймалла. Акă тинех кивĕ йывăç çуртсем курăнма пуçларĕç. Акă хайхи ман Ирĕклĕх! Калама çук хитре вырăнта ларать. Çырма леш енчи сăртра – хурăнлăх, сулахайра – хырлăх. Йĕри-тавра – вăрман. Ял хапхинчен кĕричченех хаяр йытăсен вĕрни илтĕнчĕ. Сиксе тухсан ниçта тарса пытанаймăн. Пĕрисен çурчĕ умĕнчи пĕчĕк пахчине пăру пысăкăш овчаркăпа çурине курсан чĕре ура тупаннех çитрĕ. Йыттисене кăкарман та. Хӳме урлă сиксе каçасла вĕрет асли. Кантăкран тинкерекен те пулмарĕ. Хуçисем килĕнче çукши? Хирĕççисен те йыттисем туртса çурасла вĕреççĕ. Виççĕмĕш çурта кĕрес терĕмĕр. Кунта пĕччененех Зоя аппа пурăнать. Тавах Турра, унăн йытă тавраш çук. Пире пĕр тăванĕн ывăлĕ Саша кĕтсе илчĕ. Вăл Апакассинчен мăн аккăшне пулăшма килнĕ.

Зоя аппа çак ялтах çуралса ӳснĕ. Вăл ас тăвасса, кунта 12 кил пулнă. Медицина училищи пĕтернĕ хыççăн Вăрмар каччипе пĕрлешнĕ хĕр. Ывăл ача çуратнă. Упăшки эрех ĕçсе тарăхтарнăран нумай пурăнман унпа, уйрăлнă. Республика больницинчи урологи уйрăмĕнче, Кӳкеçре, Çĕнĕ Шупашкарта медсестрара, нумай вăхăт ача садĕнче воспитательницăра ĕçленĕ. Кукамăшĕ чирлесен пĕр вăхăт Апакассинче те ĕçлесе пурăннă. Шел те, пĕртенпĕр ывăлне Славике ĕмĕрлĕхех çухатнă Зоя аппа. Виçĕ ывăлĕ ашшĕсĕр тăрса юлнă. Халĕ мăнукĕн ачисем те пур ĕнтĕ Зоя аппан. Вĕсен валли ăшă алсиш, нуски чылай çыхса хунă. Тахçан нумай сурăх усранăскерĕн çăмĕ тепĕр виçĕ михĕ те пурччĕ-ха. Арламалли машина та туяннă. Çыхать те, çĕлет те, арлать те кинемей.

Пахча çимĕçне те хăй валли çеç мар, мăнукĕсем валли те туса илет. Темиçешер çыхă сухан, миххи-миххипе çĕр улми тата темĕн тĕрлĕ çимĕç парса ярать хулана. Качака та тытать, хĕех сăвать. Путекĕсене ниçта хурайманни пирки юлашки çулсенче Машенькăна чуптарми пулнă. Ăна валли ятарласа сахăр кăшманĕ лартса ӳстернĕ. Апат кăмакара пĕçерет Зоя аппа. Мĕн тăван, авалхилле пурăнма тивет кунта. Газ тавраш çук. Вуттине сутăн туянать. Çулла машинăпа килех кӳрсе параççĕ. Мăнукĕсем татса çурма пулăшаççĕ. Вăл çынсем саппаспа пурăнма хăнăхнă. Шăрпăк, тăвар пĕтсен кӳршĕ те пулăшаймĕ ку чăтлăхра. Вăрман витĕр сукмакпа Зоя аппа хĕл кунĕнче виçĕ çухрăм мар, çĕр метр та утаяс çук. Хĕллехи кун шăрпăк пĕтсен шăнса вилме те пулать. Юрать, куккăшĕн ывăлĕ хирĕçлекенни мар, мăн аккăшĕ хушнине итлет.

Ытлашши тунсăхламасть Зоя аппа. Телевизор курать, ал ĕç тăвать. Саша нумай пулăшать. Çăва çывăхра пулни хăратмасть кинемее. «Нимĕн шикленмелли те çук, вилнисем пире сыхлаççĕ», – тет вăл. Тахçан пӳрт тулли чикан кĕрсе тăнине халĕ те манса кайман-ха Зоя аппа. Чăххине те хул хушшине хĕстерсе тухса кайнă лешсем. Çĕнĕ Шупашкарта хваттер те пур Зоя Александровнăн. Унта мăнукĕ Сергей çемйипе пурăнать. Анчах хĕрарăм хулана каясшăн мар. Хăй çуралса ӳснĕ тăрăххах лайăх ăна.

Пенсие тухсан амăшĕ патне яла килнĕ те сывăх çынни хулана урăх яман. Ăна нумай çул пăхса пурăннă. 91 çула çитнĕ амăшĕ ашшма тытăнсан хĕрне «анне» тесе чĕнме тытăннă. «Анне, эсĕ мана пăхатăн-ха, ватăлсан хăвна кам пăхĕ-ши?» – пĕрмай йĕнĕ



ватăскер.

Электричество çути пур Ирĕклĕхре. Урамра телефон та вырнаçтарнă. Тухтăрсене те, йĕрке хуралçисене те, пушарнăйсене те чĕнме пулать. Хĕл кунĕнче çулĕ кăна çук. Çавăнпа та кунта пурăнакансене Турă сыхлатăрах.

Пĕлтĕр хытах аптраса ӳкнĕ Зоя аппа. Мăнукĕсем патне шăнкăравланă. Лешсем вара çул уçтарса сыватмăша леçнĕ кинемие.

Зоя Александровнăн пӳрчĕ çĕнĕ мар пулин те пĕренисем çирĕп курăнчĕç. 53 çул каяллах лартнă ăна. Кӳршĕсен вара тата кивĕрех, коммун çурчĕсемех. Кузьминсенне 1931 çултах купаланă. Фоминсенне 78 çул каялла хăпартнă. Ăна пĕр хутчен аса та çапнă, кайран тата чăмăр çиçĕм чӳрече витĕр тухса кайнă. Çапах чăтать кивĕ çурт. Фоминсем кунта пенсие тухсан куçса килнĕ. Пусрикре çĕнĕ çурт лартма тытăннă халь.

– Пурăнатăп çапла вăрахăн. Çулла тĕрлĕ çырла, кĕркунне кăмпа вăййă пирĕн тăрăхра. Майăр кăна темшĕн юлашки çулсенче пулма пăрахрĕ. Аптрамастăп эпĕ. Пĕччененех мар вĕт çĕр çинче, – ăсатрĕ пире Зоя аппа. Кинемее сывлăх сунса сыв пуллашрăмăр. Чун кăна вăркарĕ: ăна кунта пĕччен хăварас килмерĕ.

...Таврара çаплах шăплăх хуçаланать. Куç вара Апакасси еннеллех тинкерет. Ирĕклĕхре лайăх та, килте тата лайăхрах. Вăрман витĕр халь икĕ-виçĕ мар, вун-вун çухрăм та утма хатĕр. Ăсатса ямасан – пĕччен те вĕçтерĕп. Хăвăртрах çын хушшине таврăнас килет. Тунсăх, кичемлĕх канăç памасть. Чунра пушă. Пĕчченлĕхрен хăрушши нимĕн те çук иккен.

Виçĕ пӳрт тавра – вăрман, вăрман, вăрман... Шап-шурă юр... Ирĕклĕхри, анчах пĕчченлĕхри кинемей чунне çакăнти тавралăх кăна ăнланать-тĕр...

**Елена АТАМАНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

ПĔР КУН

# Çул çинче...

**РФ ШĔМ управленийĕн республикăри çул çÿрев хăрушсăрлăх патшалăх инспекцийĕн патруль службин ĕçĕ-хĕлне тарăнрах çутатас шухăш тахçанах çуралнăччĕ. Пресс-конференцире чылай информаци, цифра асăнаççĕ-ха, çапах та «çĕр хут илтиччен пĕрре курни пахарах» теççĕ. Кăрлач уйăхĕнчи тĕл пулура Владимир Романов ертÿçĕ журналистсене патруль инспекторĕпе çÿреме сĕнни çак ĕçе пурнăçа кĕртмешкĕн хистерĕ. Юн кун ăшăрах тумланса /урамра ĕçлеме тивет-çке/ Шупашкарти Б.Хмельницкий урамĕнчи 37-мĕш çурт умне çитсе тăтăм.**



**9.00.** Çул-йĕр патруль службин уйрăм батальонĕн командирĕпе Эдуард Галкинпа, унтан взвод командирĕпе Николай Викторовпа тĕл пултăмăр. Игорь Смаев тата Александр Федоров инспекторсемпе çула тухмалла-мĕн манăн. Иккĕшĕ те аслă пĕлÿллĕ, çар хĕсмечĕ хыççăн çул çÿрев патшалăх инспекцине çул тытнă, лейтенант званине тивĕçнĕ. Игорь – 27-ре, 2011 çултанпа кунта ĕçлет, 29-ти Александр – 2008 çултанпа. Çамрăксем Шупашкарта çуралса ÿснĕ, çапах чăвашла лайăх ăнланаççĕ, калаçаççĕ те.

**10.00.** 234-мĕш экипаж маршрута тĕрĕслеме тытăнчĕ. «Çул çинче йăлтах йĕркеллĕ-и, паллăсем вырăнтах-и, ыттине те асăрхатпăр», – паллаштараççĕ хăйсен тивĕçĕпе инспекторсем.

Çула май каччăсен ĕç кунĕпе кăсăкланатăп.

– Ирхи 5 сехетре тăратăп, çăвăнатăп, физзарядка тăватăп, алă вăйĕпе 50 хутчен çĕкленетĕп. Тепĕр сехетрен ĕçе çитетĕп, кайран хĕç-пăшал кайса илмелле, çиччĕре инструктаж тухмалла, – каласа кăтартрĕ Александр Федоров.

Мускав районĕнчи тĕп урамсемпе иртрĕмĕр. Руль умĕнчи Игорь Смаев çул урлă каçма юраман вырăнтан утакан икĕ çынна сасă хытă кăларакан хатĕртен асăрхаттарма ĕлкĕрчĕ. Маршрутра пăхса çаврăннă май çитменлĕхсем курăнмарĕç. Унтан авари час-часах пулакан лаптăксене çитрĕмĕр. Çав вăхăтра юраман çĕртен çул урлă чупса каçакан хĕрарăма чарчĕç. «Мĕншĕн «зебра» çук çĕртен çÿретĕр? Ку – йĕркене пăсни, пĕррелĕхе асăрхаттаратпăр, тепрехинче штраф тÿлеме тивет», – ăнлантарчĕ Александр Федоров. Хĕрарăмăн ячĕ-шывне, хăçан çуралнине ыйтса пĕлнĕ хыççăн ÇÇХПИн регионти базипе /унта транспорт хуçисем пирки кăна мар, айăпа кĕнĕ çуран çÿрекенсен сведенийĕсем те упранаççĕ/ телефонпа çыхăнчĕç. Хĕрарăм ку сăлтавпа пĕрремĕш хутчен çакланни палăрчĕ.

**10.30.** Йĕркене асăрхамашкăн патруль машини меллĕ вырнаçса ларнăччĕ кăна, Щорс урамĕнчи 41 çурт тĕлĕнче инкек пулнине пĕлтерчĕç. Вунă минут иртиччен вырăна çитрĕмĕр те. ВАЗ-2102 тата Мазда BT-50 хире-хирĕç пынă май çула пайлайман. Шуçлака пула Мазда урапи йĕр çине анса кайнă. Пассажир çакăншăн çула пăхса тăракансене айăплать, вĕсем тивĕçлĕ тасатманнипе кăмăлсăр. Инспекторсем акт çырчĕç. Ку тĕслĕх административлă майпа йĕркене пăсни шутланмасть, çавăнпа никама та айăпламарĕç. Çак хушăра раци А.Миттов бульварĕнчи 10-мĕш çурт тĕлĕнчи инкек пирки хыпарларĕ.

**11.00.** Шар курни, çамрăк арçын, Киа сид автомобиле çул хĕрне лартса хăварса амăшĕ патне йăпăртлăха кăна кĕнĕ. Тухнă çĕре бампера лапчăтса та хунă. Айăпли – Део эсперо рулĕ умĕнче ларакан пике. Инкек сăлтавĕ – интервала пăхăнманни. Куншăн 1500 тенкĕ штраф хураççĕ. Вĕр çĕнĕ машинине сиенлетнĕ пулин те каччă хăйне лăпкă тытать, чиперккене сивĕ сăмах та каламасть. Юнашар иртсе пыракан арçын вара кăмăлне ирĕке ячĕ: «Вăт, хĕрарăмсем, çÿреме пĕлмеççĕ, намăса çухатнă» – тени хăлхана кĕрсе юлчĕ.

Део аккумуляторĕ сÿнсе ларнă. Инкекре пăрахса хăвармарĕç инспекторсем. Машинăна тапратмашкăн çынсене те чĕнчĕç, пĕрле çăмăллăнах вырăнтан хускатрĕç.

**11.50.** Короленко урамĕнче Лада гранда юпана пырса перĕннĕ, хыçалти фара çĕмĕрĕлнĕ. Страховка укçи илмешкĕн ÇÇХПИрен справка кирлĕ. Инспекторсем туххăмрах вĕçтерсе çитрĕç. Анчах хур тÿснĕ арçыннăн правилăна пăхăнманшăн хăйĕн те 1500 штраф тÿлемелле. «Ку хакпа машинăна хамах юсаттăм», – кăмăлсăрланать вăл.

Çур кун машинăра силленсе çÿресе ывăннă пек те туйăнать, ура та шăнчĕ... Каçчен мĕнле чăтас-ши? Инспекторсем умĕнче нăйкăшма аван мар, эпир, журналистсем, тÿсĕмлĕ, тĕрлĕ çĕрте ĕçлеме хăнăхнă-çке. Ирпе апат анманран чей кăна сыпса тухнăччĕ те хырăм та выçма тытăнчĕ. Сумкăна батон виçĕ касăкĕпе кăлпасси чикнĕччĕ те çавна аса илсен çăвара пушшех шыв килчĕ.

Патруль машини çулпа пынă çĕртех сасартăк чарăнчĕ. Хĕрарăмпа арçын çул урлă юраман çĕртен каçаççĕ иккен, çавсене асăрхаттарчĕç. Водительсемпе профилактика ирттерме те манмаççĕ инспекторсем. Гражданурамĕнчи чиркÿ тĕлĕнче чарăнтăмăр. Смаев та, Федоров та шурă-хура йĕрлĕ патакне илсе çул хĕрне тухрĕç. Ремень çаклатман пĕр водителе асăрхарĕç, куншăн халĕ – 1000 тенкĕ штраф. Тепĕр машина чÿречине тонировка ытлашшипех тунă. Унăн хуçи тĕксĕм пленкăна пирĕн умрах хăйпăтрĕ. Транспортăн номерĕсем вараланнă та лайăх палăрмаççĕ. Куншăн та сăмах тиврĕ. Водитель щетка туртса кăларчĕ те тасатма пикенчĕ. Çакăн пек вак-тĕвек çитменлĕхе инспектор асăрхаттармасăрах пĕтермелле-ха та...

**13.30.** ЧР Суд приставĕсен тĕп управленийĕ умĕнче, юраман тĕлте, икĕ автомобиль лартса хăварнă. Йĕрке хуралçисем кĕçех унта вĕçтерчĕç. Чăнах та, ятарлă вырăнта тăптулли транспорт, анчах ку йĕркене пăсмаллине пĕлтермест. Куншăн административлă майпа явап тыттараççĕ, 1500 тенкĕ штраф хураççĕ. Лада приора хуçине пĕлтĕр икĕ хутчен, пурĕ 2500 тенкĕлĕх, штрафланă, ÇÇХПИ базинче вăл ăна татман пек курăнать. Каччă квитанци кăтартса тÿленине ĕнентерчĕ. Порш водителĕ те пĕлтĕрхи парăмĕнчен хăтăлайман. Айăплисем нихăшĕ те инспекторсемпе тавлашмарĕç, пуçĕсене пĕксем «хурçă тусĕ» патнелле утмарчĕç.

**14.00.** Королев урамĕнчи 1-мĕш çуртри çĕр айĕнчи гаражра ВАЗ-2108 автомобиль ыттисене иртсе çÿреме чăрмантарнине пĕлтерчĕç. Тĕттĕм гаражри машинăн чÿречи ванчăк. Оперушкăн чĕнме йышăнчĕç: тен, вăрланăскер ку транспорт? Оперсем килессе кĕтме тиврĕ.

«Вĕçĕ-хĕррисĕр йыхрава пула хăш-пĕр чух апат çиме те каяймастпăр, ку пирĕншĕн – хăнăхнă пулăм», – палăртаççĕ ПАИ сотрудникĕсем. Сумкăри бутерброд пирки аса илтĕм, инспектор та çынах-çке, пĕрле ларса çирĕмĕр.

Хырăм выççине улталанă май инспекторсем путишле ĕçе аса илчĕç.

– Айăплă пĕр çынна хăвалаттăмăр. Хайхискер Атăла кĕрсе кайрĕ те ишме тапратрĕ. Çыран хĕрринче çур сехет кĕтсе лартăмăр. Арçын та ише-ише урăлчĕ... Пĕр пике пурнăçран уйрăлма шухăшланă-ши? Шупашкарти Мускав кĕперĕнчен сикнĕ. Хĕл ларас умĕн пулса иртнĕччĕ ку ĕç-пуç. Хĕре туртса кăларчĕç кăна, лешĕ каллех шыва кĕме хăтланать, çăлавçа та хăйпе пĕрле сĕтĕрет... – каласа кăтартрĕ Адександр Федоров. Оперсем çитрĕç.

**15.30.** Тинех кафене кĕрсе апатлантăмăр. Дежурнăй чаçе пĕлтермесĕр патруль машинин маршрутран пĕр метр та пăрăнма юрамасть. ГЛОНАСС тытăмĕпе тивĕçтернĕскерĕн кашни утăмĕ йĕрленет, инспектор мĕнле ĕçленине видеокамера ÿкерет.

**16.00.** 234-мĕш экипаж хăйĕн маршрутне тепĕр хут тĕрĕслеме тухрĕ. Энтузиастсен тата Граждан урамĕсенчи хĕресленĕвĕнчен инçех мар машинăна чарнă хушăра пĕр арçын пирĕн умрах çул урлă юраман вырăнта каçса кайрĕ. «Зебра» 10-20 метрта кăна-çке, светофор та пур. Сĕмсĕре унччен те штрафлани палăрчĕ. Хальхинче протокол çырчĕç, ĕнтĕ арçыннăн 500 тенкĕ тÿлеме тивет.

Йĕркене пăсакан тепĕр çынна çул пăрăнăшĕнче чарчĕç: хĕрлĕ çутă çуннă чухнех çул урлă каçать ку! Инспекторсем ăна чарма тăчĕç, анчах лешĕ тарма, аллисемпе хăлаçланма пикенчĕ. «Манăн пĕлĕш пур, шăнкăравлама парăр!» – хута кĕрекен килсе хăтарассăн туйăнчĕ-ши ăна? Кăнттам калаçаканскерĕн аллине сăнчăрлас патнех çитрĕç. Çак самантра полици машини çитсе тăчĕ. Арçын тинех лăпланчĕ. ПАИ сотрудникĕсене хирĕç тăнăшăн полицин 5-мĕш уйрăмне илсе кайрĕç.

– Çуран çÿрекен хăйĕн пирки пĕлтермесен ăна полици уйрăмне илсе кайма ирĕк пур пирĕн. Пĕррехинче çул çинчи йĕркене пăснă пĕр арçын хăйĕн хушаматне, ятне калама çине тăрсах хирĕçлерĕ. Ун пеккисем иккĕленÿ çуратаççĕ. Саккунпа килĕшÿллĕн пурăнакан çыннăн мĕнрен хăрамалла? Федераци шыравĕнче тăнă иккен çав арçын, – уçăмлатрĕ Александр Федоров лейтенант.

**17.45.** Çĕнĕ йыхрава кайиччен татах çуран çÿрекенпе калаçу пуçарма тиврĕ – вăл та юраман тĕлтен çул урлă таплаттаратчĕ.

Куйбышев урамĕнчи уйрăм çурт тĕлне çитрĕмĕр. Арăмĕ хăйĕн машинипе упăшкине пырса çапнă. Арçын хăйне лăпкă тытать, тепри пулсан ниçта кайса кĕрейми тулхăрĕччĕ. «Кун пеккине хамăр та пĕрремĕш хут куратпăр», – документ çырнă май палăртаççĕ инспекторсем.

**18.30.** Б.Хмельницкий урамĕнче ÿсĕр арçын çул çинче выртнине пĕлтерчĕç. Малтанах «васкавлă пулăшу» чĕнме палăртнăччĕ, ватă çын хăйне йĕркеллех туять. Çапах та ăна урамра пăрахса хăварма юрамасть. Эрех ĕçнипе инкеке лекнĕ тĕслĕх сахал-и? Инспекторсем усал сăмахпа перкелешекен, тем те пĕр сÿпĕлтетекен мучин кăмăлне пĕрех тупрĕç, шахвăртсах хăйсен ĕçне пурнăçларĕç – полицин 1-мĕш уйрăмне илсе çитерчĕç. «Алла сăнчăрламасан машинăран та тухмастăп!» – кăшкăрашрĕ ÿсĕрскер. Инспекторсен çаврăнăçулăхĕ темĕнле лару-тăруран тухма та пулăшать çав. Общество вырăнĕнче /урамра/ ÿсĕр çÿренĕшĕн 1949 çулта çуралнă арçын тĕлĕшĕпе административлă протокол çырчĕç. Мĕн чухлĕ штраф хурассине ятарлă комисси татса парĕ.

**19.30.** Кун каçипе те «ĕç йывăр, ывăнтăм» тенине инспекторсенчен илтмерĕм, хам вара йытă пекех хăшкăлтăм. «ПАИ сотрудникĕ пирки унччен мĕн шухăшланипе паян курни пĕр килчĕ-и?» – кăсканчĕç йĕрке хуралçисем.

Шухăш, чăн та, пачах улшăнчĕ: пуçтахсем ĕçлеççĕ унта тенĕччĕ. Куратăп та йĕркеллĕ, тĕрĕс воспитани илнĕ çынсемех тăрăшаççĕ иккен.

Киле кайма тапрантăм. Инспекторсен вара ĕçĕ вĕçленмен-ха. Смена каçхи сакăр сехетре улшăнать, кайран хĕç-пăшал леçеççĕ вĕсем. Тепĕр кун каллех ир-ирех тăрса çул-йĕрти йĕркелĕхшĕн, çын пурнăçĕшĕн кĕрешме патруле тухаççĕ.

**Çул-йĕр хăрушсăрлăхне инспекторсемпе пĕрле Алина ИЗМАН асăрханă.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

## СĂМАХ МАЙ

**РФ ШĔМĕ административлă правăна пăсни çинчен калакан Кодекса /КоАП/ улшăну кĕртме Патшалăх Думине сĕнÿпе тухнă. Документ вăя кĕрес тĕк, малашне водительсене кăна мар, çуран çÿрекенсене те алкоголь тĕлĕшпе тĕрĕслеме пуçлĕç. /Паллах, йĕркене пăсакансене/. Çапла вара юнра 0,16 мг спирт тупсан /пĕр стакан сăра çавăрса хуни те çиеле тухĕ/ çирĕпрех айăплав кĕтĕ. Йĕрке хуралçисем ыйтнине пăхăнмасан 15 талăклăха ирĕклĕхсĕр те хăварма пултарĕç. Хальлĕхе ку тĕрĕслев витĕр водительсем кăна тухаççĕ. Анчах çул-йĕр инкекĕ нумай чухне çуран çÿрекенсемпе çыхăннă. Апла тăк çак улшăну – енчен те ăна йышăнсан – инкеке сахаллатма пулăшасса шанас килет.**



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Уяв икерчи

**5 стакан çăнăх, 4 стакан сĕт, 1,5 стакан шĕвĕ хăйма, 200 грамм услам çу, 6 çăмарта, 50 грамм çĕпре, 2 апат кашăкĕ сахăр, тăвар кирлĕ.**

Эмаль кастрюльте 3 стакан çăнăха 3 стакан сĕтпе, çĕпрепе пăтратмалла. Шĕвĕ чуста хăпарсан татах сĕтпе çăнăх хушмалла. Çăмарта саррине услам çупа, сахăрпа, тăварпа хутăштармалла. Çак хутăша чустана ямалла. Хăймапа çăмарта шуррине пăтратса кăпăклантармалла. Ăна та чустапа пăтратмалла. 15-20 минутран икерчĕ пĕçерме пуçламалла.



### Мăкăньпе, пан улмипе

**3 çăмарта, 1 стакан çăнăх, 2 стакан сĕт, 2 апат кашăкĕ сахăр, типĕтнĕ 10 грамм çĕпре, 2 пан улми, 2 апат кашăкĕ мăкăнь, тăвар, тип çу кирлĕ.**

Ăшă сĕте çĕпрепе, çăмартапа, мăкăньпе, сахăрпа, тăварпа, çăнăхпа пăтратмалла. Чустана 40 минутлăха ăшă вырăна лартмалла. Унтан теркăланă пан улми хушмалла. 20 минутран икерчĕ пĕçермелле. Ăна сĕтел çине джемпа, хăймапа, услам çупа лартса памалла.

### Кăмпапа, сырпа

**Чуста валли 500 грамм сĕт, 2 çăмарта, 200 грамм çăнăх, 1 апат кашăкĕ сахăр, 1 чей кашăкĕ тăвар, 50 грамм тип çу кирлĕ.**

**Ăшне хума консервланă 1 банка шампиньон, 100 грамм сыр, 100 грамм ветчина, симĕс сухан хатĕрлемелле.**

Сĕте çăмартапа, çăнăхпа, сахăрпа, тăварпа, тип çупа пăтратмалла.

Вĕттĕн туранă шампиньона тип çупа ăшаламалла. Сыра теркăламалла. Ветчинана – тăваткалласа, симĕс сухана вĕттĕн касмалла. Çимĕçсене пăтратмалла.

Тип çу сĕрнĕ çатмана чуста ямалла. Ун çине ăшне хумалли хутăш сармалла. Ăна тепĕр сий чустапа витмелле. Ку икерче вĕрах пĕçермелле.

### Какай рулечĕ

**3 чăх пĕççи, консервланă 250 грамм шампиньон, пуçлă 5-6 сухан, 300 грамм ветчина, 200 грамм сыр, 100 грамм майонез, тип çу, тăвар кирлĕ.**

Чăх тирне, шăммине уйăрмалла. Какайне шаккаса çемçетмелле, тăвар, пăрăç сапмалла. Вĕттĕн туранă сухана тип çупа ăшаламалла, пĕрчĕлесе касня ветчина, кăмпа хушмалла. Çак хутăша 3-5 минут пăшăхламалла та чăх какайĕ çине хумалла. Ăна рулет майлă çавăрса çатмана вырнаçтармалла. Какай рулетне майонез сĕрмелле, теркăланă сыр сапмалла та духовкăра 30-40 минут пĕçермелле.



### Ăшне тултарнă кăмпа

**1 килограмм шампиньон, 300 грамм тăпăрч, 150 грамм услам çу, 3 çăмарта, 2 помидор, укроп, тăвар кирлĕ.**

Кăмпан шлепкипе тунине уйăрмалла. Вĕттĕн туранă тунине услам çупа çурма пиçиччен ăшаламалла. Тăпăрча кăмпа тунипе, вĕтетнĕ симĕс суханпа, тăварпа, çăмартапа пăтратмалла. Çак хутăша кăмпа шлепкине тултармалла. Ăна духовкăра 20 минут пĕçермелле. Кăмпана çаврашкан каснă помидор çине хурса памалла.

### Пан улмипе чăх кукăлĕ

**Чуста валли 0,5 литр турăх, 1 çăмарта, 1 чей кашăкĕ апат соди, 2 апат кашăкĕ сахăр, 1 чей кашăкĕ тăвар, 1 апат кашăкĕ услам çу, 2 стакан çăнăх кирлĕ.**

**Ăшне хума 2 чăх пĕççи, 2 пан улми, 1 шăл ыхра, теркăланă 1 чей кашăкĕ лимон хуппи, тăвар хатĕрлемелле.**

Чăх какайне тăваткалласа турамалла. Пан улмине çурма çаврашкан касмалла. Какайпа пан улмине пăтратмалла, вĕтетнĕ ыхра, лимон хуппи, тăвар хушмалла. Çак хутăша тип çупа 5 минут ăшаламалла.

Чуста çăрмалла. Çу сĕрнĕ çатмана пан улмипе какай хутăшĕ хумалла. Ăна чустапа витмелле. Кукăле духовкăра 40 минут пĕçермелле.

### Печени

**2 çăмарта, 1 стакан сахăр, 1 стакан çăнăх, вĕтетнĕ 1 стакан аçтăрхан мăйăрĕ, 1 чей кашăкĕ апат соди, варени е джем, сахăр çăнăхĕ кирлĕ.**

Çăмартана сахăрпа, мăйăрпа, апат содипе, çăнăхпа пăтратмалла. Йĕтĕрленĕ чустана тип çу сĕрнĕ çатмана хумалла. Ăна духовкăра 15-20 минут пĕçермелле. Вĕриллех варени е джем сĕрмелле. Тăваткалласа касмалла. Сĕтел çине лартиччен сахăр çăнăхĕ сапмалла.

### Кивипе кишĕр салачĕ

**5-6 киви, 2 кишĕр, 70 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, 70 грамм сыр, 50 грамм иçĕм, 200 грамм шампиньон, 1 шăл ыхра, майонез кирлĕ.**

Пĕçернĕ кишĕре, кивие тăваткалласа турамалла. 2-4 пая каснă шампиньона 7-10 минут пĕçермелле. Ыхрана – вĕттĕн, мăйăра шултран касмалла. Иçĕм çырлине вĕри шыва ярса лартмалла, сĕрмелле. Сыра теркăламалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

## Пуш уйăхĕнчи калчасем



Нарăс вĕçĕнче пăрăç, баклажан, çÿллĕ ÿсекен томат акса ĕлкĕреймерĕр пулсан пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче те çак ĕçе пурнăçлама кая юлман-ха. Çĕр температури 28-32 градус чухне пăрăç 8-10 кунран шăтать, баклажанпа томат – тата иртерех. Сивĕрех чухне калча вăрах тытăнать, сăмахран, 20 градусра томатăн пĕрремĕш çулçи 15-17 кунран тин тухать.

Калча пуç кăларсанах ăна çутă вырăна лартмалла. Кăнтăрла сывлăш температури 16-18 градус пулмалла, каçпа – 12-14. Эрнерен температурăна татах та пĕчĕклетме юрать, çакă калча ытлашши тăсăласран пулăшĕ. Анчах та ытлашши сивĕре /8 градусран аялалла/ фитофтора «çаклатас» хăрушлăх пур, çав сăлтава пулах кăпăшка чечек /хăрасах темиçе çеçке пĕрлешни/ тĕл пулать. Кайран унран илемсĕр çимĕç çуралать, çавăнпа та ун пек чечекрен тÿрех хăтăлмалла.

Пахча çимĕç калчи куçне кăларсанах им-çампа апатлантарăр, чăн-чăн çулçă тухасса ан кĕтĕр. Баклажан, пăрăç, томат фосфор юратаççĕ. Çĕре кăшт çеç нÿрĕ тытмалла. Ытлашши йĕпепе ÿсен-тăранăн тымарĕ сиенленет, кислород çитменнипе пула çĕр йÿçет, вĕтĕ шăна тапса тухать. Кун пек чухне тăпрана типĕтмешкĕн 5 кун шăвармалла мар.

Калчана çутă кирлĕ, унсăрăн чечеке ларасси те, çимĕç тытăнасси те кая юлать. Ÿсентăранран 5-7 сантиметр çÿллĕшĕнче кăнтăрлахи лампа çакса парсан тата лайăхрах. Анчах та ăна калча ÿснĕ май çĕклесе тăма тивĕ. Палăртмалла, пăрăçшăн вăрăм кун сиенлĕ, уншăн 7-8 сехет çутă та çителĕклĕ, баклажанпа томата – 11-12.

Пĕрремĕш çулçă тухсанах çĕре тимĕр препарачĕ кăштах хушнă шĕвекпе апатлантармалла. Тĕслĕхрен, тимĕрпе хлор йÿçекĕпе /ХОМ/ усă курма ансат: 10 литр сивĕ шыва 1 чей кашăкĕпе /0,05%/ хутăштармалла. Шĕвек пăсăлмасть, чылай вăхăт упранать. Унпа икĕ эрнере пĕр хутчен томата шăварсан фитофтора чирĕ те хăратмĕ. Çавăн пекех «Фитоспоринăн» вĕтĕ кĕрпине ирĕлтермелле, анчах шыв кăшт çеç пăтранчăк пултăр, хăмăрлатса яма юрамасть. Шĕвек чылай упранмасть, çавăнпа та нумай хатĕрлеме кирлĕ мар. Юлнипе пÿлĕмри чечеке шăварăр. Препаратри бактерисем шывра вăранаççĕ те тăпрари сиенлĕ микроорганизмпа кĕрешеççĕ. Баклажаншăн çак апат уйрăмах усăллă, фитофтора ăна та тапăнать-çке. Пăрăçшăн ку чир хăрушă мар пулин те тимĕр уншăн та ытлашши мар. Чылай чух пахча çимĕçе торфлă çĕре куçарса лартатпăр, унта вара çак элемент çукпа пĕрех.



Тымар тата çулçăллă сельдерей лартмашкăн йогурт стаканĕ юрăхлă. Унта пĕрре висçĕмĕш пайĕ чухлĕ тăпра тултармалла, çиеле юрпа витсе пусăрăнтармалла. Çавăнта виçĕ вăрă акмалла. Юр çинче вĕсем лайăх курăнаççĕ. Вĕтĕскерсене тăпрапа витмелле мар, юр ирĕлнĕçемĕн вĕсем унта хăйсемех сăрхăнса вырнаçаççĕ.

Стакансене пленкăпа е кантăкпа витмелле те чÿрече ани çине лартмалла. Сельдерей – сивве чăтăмлă культура, унăн вăрлăхĕ 2-4 градус ăшăра та 6-7 кунранах шăтать. Анчах кун пек чухне калчана тухма йывăр, çавăнпа та ăшăрах вырăна куçармалла. 1-2 çулçă шăтсанах чи вăйлине суйламалла, ытти калчаран хăтăлмалла. Пысăкланнăçемĕн куплемалла, шăрпăкпа тĕревлемелле, стакана хăйăр хушма та юрать.

Пуш уйăхĕн çуррине чылай вăхăт ÿсекен вĕтĕ вăрăллă чечек /петуни, немези, салтак тÿмми тата ытти те/ çак мелпе акмалла. Вăрă ыйхăран хăвăртрах вăрантăр тесен ун çине пипеткăран «Циркон» шĕвекĕ тумлатмалла. Вĕтĕскерсене шăтса тухма çутă кирлĕ, çавăнпа та тăпрапа хуплани чăрмантарать кăна. Шăварнă чухне те асăрханмалла, шыва çиелтен сапмалла мар, шприца тултарса тăпра ăшне ямалла.

Пуш вĕçĕнче бархатцы, астра акмалла, вăрăсене 1 сантиметр тарăнăшне чикеççĕ, тăпрана кашăкпа пусăрăнтармалла. Унчен малтан çĕре лайăххăн пăшăхламалла е «Фитоспорин» шĕвекĕпе шăвармалла. Çакă калча хура туналлă пуласран хăтарĕ. Ÿсентăрана çĕнĕ вырăна куçарса лартнă чухне те ку ĕçе пурнăçлама ан ÿркенĕр.

СЫВЛĂХ

## Кулленхи çимĕçсем

Диетологсем сывлăхшăн усăллă, çавăн пекех ĕмĕре вăрăмлатма пулăшакан çимĕçсен шутне çаксене кĕртеççĕ:

1. Хĕрлĕ шалча пăрçи – белокпа клетчатка çăл куçĕ.
2. Петрушка С тата А витаминпа пуян, организма тимĕрпе пуянлатать.
3. Пĕрчĕллĕ çăкăр япаласен ылмашăвне, вар-хырăм ĕçне лайăхлатать.
4. Ыхрара ракпа кĕрешекен япаласем пур.
5. Хуппипе çинĕ лимон ÿтре рак клеткисем аталанасран сыхлать.
6. Чили пăрăç юнри инсулина хăвалать, ÿт хушассинчен сыхлать.
7. Хура тул çăнăхĕнчен хатĕрленĕ лапша тимĕрпе, протеинпа, клетчаткăпа пуян.
8. Шампиньон иммун тытăмне йĕркелет.
9. Тĕттĕм шăккалат холестеринпа шайне чакарать, инфарктран сыхлать. Унсăр пуçне эндорфин шайне ÿстерет.
10. Кĕвĕллĕ сĕт вар-хырăма ĕçлеме пулăшать, организма тасатать. Ăна çывăрма выртас умĕн 1-2 стакан ĕçмелле.

## Шăнса пăсăлнинчен – шур çырли

Шур çырлинчен ытларах чухне морс хатĕрлеççĕ. Тĕрлĕ витамин нумайран тата бактерисемпе кĕрешме пултарнăран вăл чăннипех те сиплĕ, усăллă. Анчах та пысăк температурăра пахалăхĕ чакать. Çавăнпа та çырлана вĕретменни лайăхрах. Чĕрĕлле тÿсе вĕренĕ шывпа хутăштарни чылай усăллă. Пылаклатма сахăр мар, пыл хушмалла. Сунас аптратса çитерсен сăмса шăтăкне пĕрер çырла чиксе выртни те пулăшать.

## Пуç мимишĕн усăллă

А витамин пулă çăвĕнче, пĕверĕнче пур. Бета-каротин тĕттĕм симĕс, хĕрлĕрех сарă пахча çимĕçре нумай. В ушкăнри витаминсем /рис, турăх, хăйма, аш-какай, пахча çимĕç, улма-çырла, çăмарта, мăйăр, сĕт-турăх/ организма стресран хÿтĕлеççĕ, ас туса юлассине лайăхлатаççĕ. С витамин купăстара, хура хурлăханра, цитрус çимĕçĕнче нумай. Вăл шывра ирĕлекен антиоксидант шутланать. Асăннă витамин çынна хăвăрт шухăшлама пулăшать. Е витаминпа соя, тип çу, çăмарта, хĕвел çаврăнăш вăрри, мăйăр пуян. Вăл В витамин витĕмне ÿстерет.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

## Утă шывĕ



Çуркунне çитнĕ май чылайăшĕн ĕни пăрулама та ĕлкĕрчĕ пуль ĕнтĕ. Тин çеç çут тĕнчене килнĕскерне лайăх пăхмалла. Пăрушăн утă шывĕ питĕ усăллă. Ăна хатĕрлеме ансат. Пахалăхлă утă суйласа вĕтетмелле те вĕри шыва ярса лартмалла. 7 литр шыв пуçне 1 килограмм утă кирлĕ. 6 сехетрен ăна марля витĕр сĕрмелле. 1 литр утă шывĕ пуçне 1 грамм тăвар илĕр.

Ăна пăрăва эрнеренех ĕçтерме юрать. Малтанхи вунă кунра 0,5 литр пани çителĕклĕ. Кайран кашни вунă кунлăхра çуршар литр хушăр, майĕпен 5-е çитерĕр.



ЧУНРИ

# Çурхи шывпа юхса кайнă телей

Çуркунне çитмессерен чунчĕрене тунсăх пусать. Аса илӳпе темиçе çул каяллахи тапхăра таврăнатăп. Пулни-иртнине тепĕр хут куç умне кăларатăп. Хавасла та ырă кунсем хыççăн темшĕн асапла та хурлă каçсем çитеççĕ. Ыйхă вĕçнĕ каçсенче чӳречерен сăнаса, тӳпери çăлтăрсене шутласа выртатăп. Чун тăвăлса çитнĕ чухне никама та курас, никампа та калаçас килмест.

Кӳршĕ ялăн хӳхĕм хĕрĕпе ăнсăртран паллашрăм. Кăвак куçлăскер, сарă çӳçлĕскер тӳрех кăмăла кайрĕ. Ăшă йăл кулли чунра ырă туйăм çуратрĕ. Унпа тем çинчен те калаçаттăмăр, шӳтлеттĕмĕр. Юнашар чухне вăхăт иртнине те сисместĕмччĕ. Савнă хĕр алла диплом илсен пĕрлешме ĕмĕтленеттĕмĕр. Анчах ĕмĕтĕмсем çурхи шывпа юхса кайрĕç. Вăл юлашки курсра урăх йĕкĕте каччă тухрĕ. Ытла та хăвăрт манчĕ вăл мана, туйăма пĕр шелсĕр таптарĕ. Хӳхĕм хĕр çапла хăтланма пултарасса эпĕ шухăшлама та пултарайман. Эпир унпа питрав типпинчен тухсан пĕрлешме калаçса татăлнăччĕ. Вăл вара сăмахне тытаймарĕ, кĕтнĕ кун çитиччен икĕ уйăх маларах туй кĕпи тăхăнчĕ.

Çак хыпара пĕлсен манăн çут тĕнчерен уйрăлса каяс килчĕ. Юрать-ха юлташсен пулăшăвĕ çак утăмран çăлса хăварчĕ. Вĕсем май килнĕ таран мана лăплантарчĕç, умри тунсăх чаршавне сирме хăтланчĕç. Анчах чĕрери суран часах сиплеснешĕн пулмарĕ, кăвак куç тĕлĕкре те канăç памарĕ. Савнă хĕр валли туяннă куçлă çĕрĕ çине тинкерсен çан-çурăм тăрăх сивĕ чупса иртетчĕ, кăмăл хуçăлатчĕ. Малтан ырă туйăм çуратакан çĕрĕрен уйрăлма шухăш тытрăм. Текех мана кӳршĕ ял хĕрĕпе /халĕ урăх район кинĕпе/ нимĕн те çыхăнтарса ан тăтăр тесе ял çумĕнчи юхан шыв урлă хывнă чĕнтĕрлĕ кĕпер енне утрăм. Шăнкăртатса юхакан çурхи шыв çине вăрахчен сăнаса тăтăм, каллех аса илӳ çăмхине сӳтрĕм. Лăпланса çитрĕм те алăри çĕрре шыва пăрахрăм. Тен, юмахри пек, çĕрре вутăш тупса тăхăнĕ, мана тав тăвĕ. Çапла хам юратăва, хавасла çамрăклăха çурхи шывпа юхтарса ятăм.

**Александр САНСĂР.**



КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Уйăх çинчи пике

Çырмаран шыв ăсса хăпаракан хĕре курсан Кĕркурин чĕри вырăнтан хускалчĕ. Кĕвентеллĕ пике уйăх çинчен йăтăнса аннăнах туйăнчĕ. Чăн пурнăçра çавнашкал илемлĕ хĕре халĕччен курманччĕ каччă. Çавăнпах-ши юмахри евĕр илĕртӳллĕскерпе тĕлме-тĕл пулсан Кĕркурин чĕлхи çĕтрĕ. Анастасия Степановна ăçтарах пурăннине ыйтса пĕлесшĕнччĕ вăл, çавăнпах йывăр тиевлĕ машинине чарнăччĕ. Юратьха хĕр хăех сăмах чĕнсе ăна çĕр çине тавăрчĕ. «Эсир пирĕн пата кирпĕч илсе килтĕр пулĕ-ха? Анне паян сире иртенпех кĕтет», – терĕ çĕклемлĕ хĕр.



Анастасия Степановна автомашина хуçине кирпĕче ăçтарах пушатмаллине кăтартрĕ. «Пулăшмашкăн кӳршĕсене кайса чĕн-ха, Лариса», – ыйтрĕ хĕрне амăшĕ. Часах пурте ĕçе тытăнчĕç, шофер та алă усса тăмарĕ. Хăй Ларисăна куç илми сăнарĕ. «Çухатас марччĕ ку хĕре, хитре кăна мар, пăрчăкан пек вăрварскер тата», – асăрхарĕ каччă. Кирпĕч пушатса пĕтерсен кил хуçи халăха чейпе сăйланма чĕнчĕ. Пӳрте кĕриччен Кĕркури алă çума пахчана кĕчĕ. «Лариса, çитес канмалли кун килме юрать-и сан пата?» – меллĕ самант тупăнсан ыйтрĕ каччă. «Хăвăн ирĕкӳ», – терĕ çеç хĕр.

Каччă хăйĕн сăмахне тытрĕ, каç кӳлĕм Ларисăсен ялне мотоциклпа вĕçтерсе те çитрĕ. Тĕрĕссипе, вăл килесси пирки хĕр иккĕленнĕччĕ, питех шанмастчĕ вăл йĕкĕтсене. Пĕрремĕш каçрах Ларисăпа Кĕркури шурăм пуç çуталиччен те уйрăлаймарĕç. Çак вăхăтра каччă çинчен йăлтах пĕлме ĕлкĕрчĕ хĕр. Яш райцентрта çуралса ӳснĕ иккен, çулталăк каялла çартан таврăннă, автопредприятире ĕçлет, кусăн мар майпа техникумра вĕренет... Кайран хĕрпе каччă татах тĕл пулчĕç, пĕр-пĕринсĕр пурăнаймарĕç вĕсем.

Кĕçех çамрăксем пĕрлешрĕç. Туй хыççăн çамрăк мăшăр ашшĕ-амăшĕн килĕнче пурăнчĕ. Кĕркури хăйĕн çемйи валли уйрăм çурт лартма тытăнчĕ. Виçĕ çултан унта пурăнма куçрĕç вĕсем. Мăшăр икĕ хĕрпе ывăла кун çути парнелерĕ. Юратупа килĕшӳре ӳснĕскерсем лайăх çынсем пулса тăчĕç, пурнăçра часах хăйсен вырăнне тупрĕç. Аслă пĕлӳ илсе хулара ĕçе вырнаçрĕç, çемье çавăрчĕç, ашшĕ-амăшне мăнуксемпе савăнтарчĕç. Вĕсем тăван кил-çурта час-часах килсе çӳреççĕ.

Лариса мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен библиотекăра ĕçлерĕ, упăшки Григорий Иванович – автопредприяти гаражĕн пуçлăхĕнче. Кунсăр пуçне вăл – депутат, общество ĕçне хастар хутшăнать. Мăшăрне пĕр усал сăмахпа та кӳрентермест вăл. Шăкăл-шăкăл калаçса килти ĕçсене йăлтах пĕрле пурнăçлаççĕ. Чăх-чĕпсĕр пуçне кролик та усраççĕ.

Кĕркурипе Лариса халĕ ватă мар-ха, килте иккĕшех тăрса юлчĕç вĕсем. Хире-хирĕç ларса иртнине, уйрăмах – мĕнле паллашнине, аса илме юратать мăшăр. Кĕвентепе шыв çĕклекен юмахри евĕр пикепе ĕмĕре иртернĕшĕн Кĕркури хăйне чи телейлĕ арçын вырăннех йышăнать.

**Александр ВИШНЕВСКИЙ.**
Шупашкар хули.

ХĂТЬ МĔН КАЛĂР...

# Пĕччен хĕрарăм

Упăшка тепĕр хĕрарăм патне пăрахса тухса кайнă чухне ывăлăм çулталăкра кăначчĕ. Малтан ĕненес килмерĕ, мана хăратать кăна тесе шухăшланăччĕ. Лăпкăн йышăнтăм çакна. Йĕрейĕре каялла таврăнма та ыйтмарăм. Эрне, уйăх иртрĕ... Çук та çук. Шăнкăравласан телефонне тытмасть. Пĕррехинче ачапа сĕт кухнине хуллен утнă май мана хирĕç пĕр майрапа çавăтăнса килнине куртăм. Нимĕн чĕнмесĕр иртсе кайрĕ. Ачи çавăрнса «атте», «атте» тесе кăшкăрма тытăнчĕ. Пĕлесчĕ сирĕн эпĕ çак вăхăтра мĕн туйнине. Чĕрем сиксе тухасла тапма пуçларĕ, пит çине пăрса пек тар тапса тухрĕ. Ун чухне эпир уйрăлманччĕ-ха. Килте пĕр пус укça хăварманран пушшех йывăрччĕ. Эпĕ ĕçлеместĕп, ачи пĕрмай чирлет. Хура çăкăрпа сĕтсĕр пуçне нимĕн те туянмастăмччĕ. Курăк чейĕ кăна ĕçкелесе пурăнаттăм. Юрать, тус-тантăш, тăвансем пăрахмарĕç. Пĕри çĕр улми, тепри сухан-кишĕр, сĕт-турăх леçсе парать. Чăтаймарăм, алимента кайса патăм. Урса кайнăскер вĕçтерсе çитрĕ, нихăçан та пулăшмассипе хăратрĕ. Ал шăлли, шăпăр, чашăк-тирĕк таран пуçтарса тухса кайрĕ. Çука юлмарăм уншăн. Ĕçре алимент тӳлесе пурăннинчен кулаççĕ имĕш унран. Ачана, çемьене пăрахса хăварнăшăн намăс мар ăна. Малтанхи кунсенче, ăна хытă тарăхнă пулсан та, каçарма, каялла кĕртме хатĕрччĕ эпĕ. Ывăлăма ашшĕсĕр хăварас килместчĕ.

Çук, таврăнмарĕ. Туй тусах тепĕр çемье çавăрчĕ. Хĕр те, ывăл та пур унăн халь. Эпĕ те улшăнтăм. Мана та макăрса ларса ывăнтарчĕ. Çĕнĕ пурнăç пирки шухăшлама тытăнтăм. Арçынсене те халь çаварттаратăп кăна. Пĕринпе кафене каятăп, тепринпе – саунăна е мунчана... Тилхеперен вĕçерĕннĕ йĕвенсĕр кĕсре пекех туятăп хама. Йĕркелли тупăнсанах çемье çавăрасшăн-ха. Ун пеккисене çаклатма йывăр. Пĕтĕм суйланчăкĕ кăна лекет. Пĕри ырă кăмăллă, анчах та сăнĕпе ман валли мар. Иккĕмĕшĕ ытла ватă тата. Тепри питĕ килĕшет, анчах вăл çемье çавăрса пурăнасшăн мар. Ирĕклĕхе хăнăхнăскер яваплăхран хăрать. Арăмĕсем йăлăхтарса çитернипе вăхăт ирттерессишĕн калаçакан та пур. Çуртйĕрсĕрри вара мана кăсăклантармасть те – пĕчĕк пӳлĕмре хамăра та тăвăр.

Вăхăта хавасла ирттеретĕп эпĕ. Тунсăхласа, кичемленсе лармастăп килте. Паян – ташă каçĕнче, ыран – кафере. Ĕçтереççĕ, çитереççĕ, мĕншĕн хирĕçлес. Ăçта чĕнеççĕ – çавăнта каятăп. Анчах та киле таврăнсан чунăмра пушпушă. Эпĕ вĕсене вăхăтлăх йăпанма кăна кирлине туятăп-çке. Манран уйрăлсан савнă арăмĕсем патнех таврăнаççĕ. Уявсенче те пĕччене эпĕ. Телефонпа саламлаççĕ те, ман çинчен тӳрех манаççĕ. Парне пирки сăмах та çук.

Малтан эпĕ те лайăхчĕ. Сăпайлăччĕ, вăтанчăкчĕ. Упăшкана никампа улăштарса курман. Шухăш та пулман. Юттисем çине çаврăнса та пăхман. Халь хăть троллейбусра, хăть урамра – арçынсем çинчен куç илместĕп. Ятарласа паллашмалли сăлтав шыратăп. Пĕрремĕш тĕл пулурах хам пĕччennи пирки систеретĕп.

Çăмăлттай тесе шухăшлама кирлĕ мар ман пирки. Мăшăрлипе выляпалаçа илме пултаратăп, анчах та уйрăласси патнех çитерместĕп. Тепĕр çын телейĕ ним тума та кирлĕ мар. Лава пĕччен туртма йывăр. Манăн та çемьепе пурăнса курас килет. Телейлĕ мăшăрсене, ашшĕпе вылякан ачине курсан чĕре çĕçĕпе каснăн ыратать. Вăл вара ывăлăма килсе те курмасть, кучченеç те илсе памасть. Тумтир пирки каламалли те çук.

Ман пек пĕччен хĕрарăм нумай халь. Çапах та йĕркеллĕ арçын тупса çемье çавăрасси пирки ĕмĕтленме пăрахмастăп-ха. Пӳрни пӳрт хыçнех килет теççĕ те. Килессе кĕтсе лармалли çук пуль ку пурнăçра. Хамăн хамăнах тăрăшмалла. Çын сăмахĕ тахçанах хăратмасть мана. Эпĕ ирĕклĕ çын. Çулсем иртсе кайиччен манăн та хитре пурăнса курас килет.

**ИРИНА.**
Шупашкар хули.



КУЛЬТУРА ҪУЛТАЛĂКĔ

# Ларма хĕр



● НЕСĔЛСЕН ЫРĂ ЙĂЛИ-ЙĔРКИНЕ УПРАМА ТĂРĂШАТЬ ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ. АЛ ĔҪ ĂСТАЛĂХНЕ ҪАМРĂКСЕНЕ ТЕ ХĂНĂХТАРАТЬ. ҪĔНĔ ШУПАШКАРТА ПУРĂНАКАНСЕМ ҪАК ТĔЛЛЕВПЕ «УЛАХ» УЯВ ИРТТЕРНĔ.

Ҫуллахи пĕр шăрăх кун шурă Шупашкарта Атăл хĕррипе утаттăм. Тавралăха сăнама юрататăп эпĕ. Акă савăнăҫлă ача-пăча шавласа иртрĕ умран. Леререх хĕрсемпе каччăсем шăкăл-шăкăл калаҫаççĕ. Чăваш академи театрĕ умĕнче сак ҫинче пĕр кинемейпе ҫамрăк пике кăмăллăн пуплесе лараççĕ. Эпĕ вĕсен ҫывăхне пырса тăтăм, калаҫăва хутшăнтăм: «Ларма хĕрсем пекех эсир». Куҫăма илĕртекен чипер пике кинемей еннелле ҫаврăнчĕ: «Мĕне пĕлтерет «ларма» тени?»

Кинемей сăмах ваклама юрататакан ҫын пулчĕ. Эпĕ те вĕсен ҫумне пырса лартăм. Хăйĕн ҫамрăклăхне аса илчĕ пулас, каларĕ те каларĕ иртнĕ кунсем ҫинчен. Нуски ҫыхнă май малаллах тăсрĕ калаҫăва.

– Эпĕ хулара ӳснĕ пулин те ҫамрăк чухне яла тăван-пĕлĕш патне тăтăш ҫӳреттĕм. Ларма та кайнă. Ҫăм арланă, нуски-чăлха ҫыхнă, тĕрĕ тĕрленĕ, пир тĕртнĕ, ҫип пĕтĕрнĕ, – пирĕн кăмăла хуҫас мар тесе кинемей «Чĕкеҫ аппа ларма хĕр» сăмах майлашăвăн пĕлтерĕшне ăнлантарма тытăнчĕ.

– Ĕлĕк чăваш хĕрĕсем ларма ҫӳренĕ. Хĕл ҫитсен кĕнчеле арланă, ҫип пĕтĕрнĕ, тĕрĕ тĕрленĕ. Ал шăлли, пит шăлли, саппунпа тутăр тĕрлĕ эрешпе илемленнĕ. Ал ĕҫ тума улаха кӳршĕсем патне кайнă, ют ялти тăванĕсем патне те ҫӳренĕ. Ларма хĕрсене ăшшăн кĕтсе илнĕ, тутлă апат-ҫимĕҫпе сăйланă. Каҫхине улахсене илсе кайнă. Унта майăрпа хăналанă, хĕрсем пĕр-пĕрин тĕррисене ӳкерсе илнĕ, ĕҫленĕ май юрă шăрантарнă, каччăсем вара купăс каласа ташлаттарнă. Яшсем ларма хĕрсене курма ятарласа пынă.

Тăван ялта нимех те мар-ха: пурне те паллатăн, пĕлетĕн. Ют яла ларма каяс пулсан лайăх шухăшламалла пулнă. Ашшĕ-амăшĕ хĕрне ăс панă. Ларма каякан хĕрĕн ял чысне упрамалла пулнă. Апла тăк илемлĕ те шеп тумланмалла, хитре утмалла, йĕркеллĕ, сăпайлă калаҫмалла, ĕҫлемелле те. Ларма хĕре кăнтăрла килтен киле хăнана илсе ҫӳренĕ: паян – пĕр тăван патĕнче, ыран – теприн патĕнче. Ҫапла яш-кĕрĕме, ларма хĕрсене ҫичĕ сыпăк таран паллаштарнă. Аслисем, мăн асаттесемпе мăн асаннесем ҫапла тăванлăх туйăмне ҫирĕплетме тăрăшнă. Кӳршĕсем те хăнана илсе кайнă, сĕтел хушшине апата лартнă. Ларма хĕре килтех вĕрентнĕ: чавсаланса ан лар, яшкана тăкмасăр ҫи, кашăка тирпейлĕ тыт, ытлашши ан калаҫ, ваттисем каланине итле... Ҫапла тытма тăрăшнă та ларма хĕр хăйне. Ăна курма каччăсем те пынă-ҫке. Ҫăлран шыв ăсса килнĕ чух ларма хĕр уттине те сăнанă. Мăшăр витрепе е шыв ҫĕклемĕпе мĕнле утать, витрери шыв тăкăнмасть-и хĕрĕн?..

Ларма каякан хĕр хăйĕнпе пĕрле ĕҫ илнĕ. Ҫав ĕҫе туса пĕтермесĕр каялла киле таврăнма юраман. Ҫавăнпа та ҫĕрĕпех ал ĕҫ тунă. Ют ялта нумаях пурăнас килмен. Ал ĕҫне туса пĕтернĕ, киле кайма вăхăт. Тăванĕсем ларма хĕре ăшшăн кĕтсе илсе ăшшăн ăсатнă, тепĕр ҫул татах килме чĕннĕ. Пике тăван ялне ҫитсен тантăшĕсене хăй ют ялта илтнĕ, вĕреннĕ юрăсене юрласа кăтартнă, вĕрентнĕ, ҫĕнĕ тĕрĕсемпе, чĕнтĕрсемпе паллаштарнă. Ларма кайни усăсăр иртмен. Ҫавăнпа та ун чухне чăваш хĕрĕсем тĕрлеме те, ҫыхма та, пир тĕртме те ăста пулнă. Икшер арча, ҫӳпçе тулли пир-авăрпа каччă кайнă. Ытла та ырă йăла пулнă чăвашăн. Ĕҫченлĕхе, сăпайлăха кашни ҫемьерех вĕрентнĕ.

Самана улшăннă май ларма ҫӳресси те пурнăҫран тухса пырать. Халь хĕрсем вĕренеççĕ, хулара ĕçлеççĕ. Час-часах ҫамрăксенчен ыйтатăн: «Ларма ҫӳретĕр-и?» Улах ҫинчен калама тытăнаççĕ, ларма ҫинчен пĕлмеççĕ те. Хăй вăхăчĕшĕн ҫав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă вĕт-ха ларма. Халăх хушшинче хăвна мĕнле тытмалла, тăвана мĕнле хисеплемелле, ăна мĕнле йышăнмалла... Тăванлăх туйăмĕ ҫирĕпленнĕ унта, хĕрсем чыслăха упранă, ĕçе хăнăхнă тата ыт.те.

Ларма ҫӳренĕ кукамайсемпе асаннесем... Ҫавăнпах илемлĕ пулĕ вĕсем сырнă сурпансем, вĕсем тĕртнĕ пир-авăр, сак сармисем, кавирсем.

Илеме курма пĕлнех вĕсем!

Нумай аса илчĕ Чĕкеҫ аппа ĕлĕкхине. Эпĕ университет студенткипе кинемее чунтан-вартан ырлăх-сывлăх сунса сыв пуллашрăм.

**Борис БОРИСОВ.**
Элĕк районĕ.

ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

***Лидия УГАХИНА***

# Ҫăварни

Эх, ҫăварни, ҫăварни,
Каясшăн мар Хĕл мучи.
Кăшарни сиввисене
Ура хурать ҫур ăшши.

Кĕҫĕн, аслă ҫăварни,
Ҫимелле ĕне ырри.
Эрнипелен хăпарту,
Хăнасене хапăл ту.

Ай, ҫăварни, ҫăварни,
Шăнкăр-шăнкăр ҫуркунне.
Хĕр тĕрленĕ пит шăлли,
Пĕкĕ ҫине ҫакмалли.

Эй, ҫăварни, ҫăварни,
Пире кĕтет тăвайкки.
Чупар-и-ха катаччи,
Шăнкăравлă ут пĕкки.

Ух! ҫăварни, ҫăварни,
Ҫаврăнар-и ял тавра?
Ян янратăр юрлани,
Сĕлкĕ вĕҫтĕр пуҫ тавра.

Сăсар ҫĕлĕк пуҫ ҫинче,
Сарă кĕрĕк хĕр ҫинче.
Ушкăн сасси ян! каять,
Ҫамрăк чунĕ вылянать.

«Ҫăварнийĕн ҫăмарти –
Катăк ҫатма куймакки!»
Кунĕ хĕлĕн юлашки,
Шавлать кăна тăвайкки.



***Валентина АЛЕКСЕЕВА***

* * *

Вăранать ҫурхи кун, вăранать,
Ҫырма ҫийĕн тĕтре пăсланать.
Сар хĕвел тӳпене хăпарать,
Пурăнма ҫĕнĕ вăй вăл хушать.

Шăрçаланнă ҫут сывлăм типет,
Кăтраланнă шур пĕлĕт иртет.
Шур тĕтре майĕпен сирĕлет,
Ҫĕнĕ кун ҫĕнĕ ĕмĕр пиллет.

Мăшăрне пĕччен кайăк шырать,
Тӳпере сар хĕвел вăй вылять,
Ҫамрăк кайăк ҫĕн юрă юрлать,
Ыр ҫынсен пурнăçне вăл тăсать.

Пурăнар пĕр-пĕрне юратса,
Сар хĕвел айĕнче савăнса.
Вăл пурне те пĕр тикĕс пăхать,
Пурнăҫа малалла шав тăсать.

* * *

Шурă лĕпĕш пулса вĕçсе пырас терĕм – пырайман.
Сарă ҫулçă пулса умна ӳкес терĕм – ӳкеймерĕм.
Калас терĕм сана чун-чĕре ҫуннине – калаймарăм.
Курас терĕм санпа сар хĕвел тухнине – кураймарăм.
Пулас терĕм санпа ĕмĕрех эп пĕрле – пулаймарăм.
Эп пĕртен пĕр сана ҫеç чунтан савнине чухлаймарăн...

КИВĔ САН ӲКЕРЧĔК

# Туй, туй, туй тесе...



**Ҫак сăн ӳкерчĕкре – пирĕн тăрăхри туй арăмĕсемпе кĕҫĕн кĕрӳсем. Ҫамрăксем пĕрлешни пирки хыпар сарăлсанах ялĕпех туя хатĕрленнĕ. Хĕрарăмсем ума ҫакмалли тенкисене /амисене/ ҫутатма тăрăшнă.**

**Туй питĕ савнăҫлă иртетчĕ. Кĕтнĕ кун ҫитсен кĕҫĕн кĕрӳсем лаша кӳлсе купăс каласа ял тăрăх халăха чĕнсе ҫӳретчĕҫ. Хитре саппун ҫакнăскерсен тĕп тивĕҫĕ – ҫынсене юрлаттарасси, ташлаттарасси. Хĕрсем кĕҫĕн кĕрӳсене парне те ҫакса яратчĕҫ. Авланаканăн хăйматлăхĕсем ĕҫке йĕркелесе пынă. «Чăваш хĕрарăмĕн» вулаканĕсене каччă енчен килекенсен пирĕн патри юррипе паллаштарас килет.**

Чолик, чолик сала кайăк /2 хут/
Ҫĕр улми ҫумĕнчен уйрăлса
Сарай ҫумне ҫыпăҫрĕ.
Ой, шăллăм /авланакан каччă ячĕ/,
Яш-кĕрĕмрен уйрăлса
Ватта-вĕтте ҫыпăҫрĕ.

Ах, шалккă-ҫке лашине:
Аслă улăх варринче
Симĕс курăк ҫиес чух
Суха патне кӳлтĕмĕр.
Ах, шалккă-ҫке шăллăмне:
Хĕрсе хĕрпе ҫӳрес чух
Авлантарса ятăмăр.

Сĕм вăрманти яштак хыр
Лесник валли – куç валли,
Чăваш валли – пӳрт валли.
Ай, мăнтарăн тăхлачи,
Эс ӳстернĕ яштак хĕр
Сире валли – куç валли.
Пире валли – ĕмĕрлĕх.

Ҫăка ҫулçи ҫаврака.
Тем чуль ҫавра пулсан та
Чечек ҫыххи пулас ҫук,
Ачаш кинĕм / каччă каякан хĕр ячĕ/,
Тем чул хитре пулсан та
Тин хĕр пулса ҫӳрес ҫук.

Ой, кинĕм /каччă каякан хĕр ячĕ/,
Пирĕн пата пырсассăн
Шур пӳрт лартас хуйхă ҫук,
Шур ампар лартас хуйхă ҫук.
Ача ту та ача пăх.
Ача пăхма аннӳ пур –
Ҫуллен ача туса пар.

**Нина АНТОНОВА.**
Шупашкар районĕ.



ОЛИМП ÇĂЛТĂРĔ

# Çĕнтерес пултарулăх ăна юн шайĕнче куçнă

### Улатăр Аделинăна ас тăвать

...Çак фигуристка пăр арени çине тухсан Улатăрсем сенкер экран çумне çыпăçсах ларнине калама кирлех-ши? "Ав пирĕнни еплерех кастарать!" – тĕкнĕ вĕсем чавсисемпе пĕр-пĕрне. Комментатор пĕтĕмлетÿллĕ балсене пĕлтеричченех ĕмĕр иртнĕ евĕр туйăннă ахăр...

Чиперкке Аделина пирки Улатăрсем "пирĕн" тесе ахальтен каламаççĕ. Ентеш вĕт çапах та – кунта унăн мăн кукашшĕ, Совет Союзĕн Геройĕ Александр Кочетов çуралнă. Кунтанах вăл Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине тухса кайнă. Çĕнтерÿпе те кунтах таврăннă. Чăн та, вăрçă ветеранĕ пурнăçран тахçанах уйрăлнă. Анчах паттăр ячĕ – вилĕмсĕр. Паян Чăваш Енри нумай урам тата вĕренÿ заведенийĕ Кочетов ячĕпе хисепленет.

– Кочетовсен ачисем тахçанах куçса кайнă. Аделина кукамăшĕ вара Сергиев Посад хулинче пурăнать, – пĕлтереççĕ Улатăрсем. – Аделина мăн кукашшĕне хывнине çирĕплетсех калама пулать: ав мĕнле паттăрлăхпа палăрчĕ вăл! Александр Кочетов вăрçа истребитель-летчик пулса хутшăннă. Тăшманăн 34 самолетне персе антарнă вăл, çапăçу тÿпине 488 хут вĕçсе хăпарнă. Аделина вара Олимпиадăра "ылтăн" çĕнсе илчĕ!

Улатăрта Кочетовсен, апла, Аделина Сотниковăн та, тăванĕсем паян та пурăнаççĕ: Анатолий Николаевич тата Любовь Александровна Федотовсем.

– Ман шухăшпа, Аделина Тăван çĕр-шыв хÿтĕлевçисен кунĕ тĕлне маншăн, ывăлăмшăн Алексейшĕн тата Раççей пур арçыннишĕн тĕлĕнмелле пысăк парне турĕ, – тет Анатолий Федотов.

– Вăл халĕ хăй те тăна кĕрсе пĕтеймен-ха, мĕн "туса хунине" те ăнланса çитерейместтĕр... Ыран – аттен ас тăвăм кунĕ. Вăл вара çакăн пек парнепе савăнтарчĕ, маттур. Тĕрĕссипе, вăл ача чухнех çакăн пекчĕ... йăлт хăй тума тăрăшатчĕ... çине тăма пĕлетчĕ... Тепĕр тесен, унăн камран тĕслĕх илмелли пур, – тет Аделина кукамăшĕ Адель Кочетова.

Олимп пулас чемпионкин кăмăлĕ мĕнле çирĕпленсе пынине те вăлах каласа кăтартнă.

– Мăнукăм тĕлĕнмелле çирĕп кăмăллă, чăтăмлă. Ас тăватăп-ха унпа, пĕчĕкскерпе, метрора пыратпăр. Вăл тĕлĕрет. Кирлĕ чарăнăва çитетпĕр те, ак хайхи, сиксе тăрать те хăех утать. Çак çулти ытти шăпăрлан пек кутăнлашмасть, макăрмасть, алла илме ыйтмасть... Аделина пăр çинче илемлĕ хусканусем туса ярăнма питĕ кăмăллать. Пĕтĕм вăхăт унтах иртет унăн. Çĕнĕ çулта пире савăнтарассишĕн пăр çине тухрĕ. Тепĕр чух шелленипе кăшт та пулин канма ыйтсан: "Мана никам та хистемест, манăн хамăн ярăнас килет, унсăр пултараймастăп эпĕ", – тет.

Сăмах май, Улатăр темиçе урамне Совет Союзĕн Геройĕн Александр Кочетовăн ятне панă. Олимп чемпионкин Аделина Сотниковăн хăйне ятăн урам пулĕ-ши?





**Совет тата Раççей спорт историйĕнче кун пекки пулманччĕ-ха – пирĕн çĕр-шыври пĕччен ярăнакан хĕрарăм фигуристсенчен ку таранччен никам та ылтăн медаль çĕнсе илмен. Историе çĕнĕ варкăш вĕртсе кĕртекенни вара 17 çулти хĕр пĕрчи Аделина Сотникова пулчĕ. Вăл, Чăваш Енри Улатăр районĕнче çуралнă Александр Кочетовăн мăнукĕн ачи, хăй пуринчен те маттурри, харсăрри, пултарулли пулнине тĕнче умĕнче ĕнентерме пултарчĕ. Çапла Аделина Сотникова Олимп чемпионкин титулне тивĕçрĕ.**

### "Хама королева пек туйрăм!"

...Икĕ кун. Икĕ кун туйăмсем хуранри пек вĕререç... Пĕрремĕш кун вăй питти арçынсем, финсене параннăскерсем, никама куçран пăхма хăяймасăр саланчĕç. Куракансем вара куççуль тинĕсĕнче путрĕç. Йăлт пĕтнĕ, арканнă пек туйăнчĕ çак кун. Туйăмсем те, ĕмĕтсем те, Олимпиада та... Пусăрăнчăк кăмăл илемлĕ хĕрсен черченкĕ хулпуççийĕсем çине ÿкрĕ...

"Хоккейшăн та хуравларĕ!" Социаллă сетьсенчи комментарисенче Аделина Сотниковăн телейпе тулнă сăн ÿкерчĕкĕ айне çапла çыра-çыра хураççĕ. Чăн та, мĕнлерех хуравларĕ-ха тата!

Çĕнтерÿ хыççăн Аделина Сотникова журналистсен умĕнче кăмăл-туйăмне ирĕке янă.

– Вăй пухмашкăн манăн хама королева пек туймалла. Хама шăпах кунта çапла туйрăм та! – йăл куллине парнеленĕ хĕр пухăннисене. Хăйĕнче "çĕнĕ Аделина" çуралнине те пытарман чемпионка.

– Пăр çине тухсанах хам текех ярăнмасăр пурăнма пултарайманнине ăнланса илтĕм. Халĕ вара çакна ĕнентерме те пултартăм. Малтанхи Аделинăран çине тăрасси тата тĕллев патне ниме пăхмасăр талпăнасси, темĕнле вăй юлчĕ. Халĕ эпĕ, ун чухнехипе танлаштарсан, урăхларах Аделина. Манра темĕн çĕнни вăранчĕ. Ку лайăх паллах. Йăл куллăм кăна – малтанхиех...

Аделина Сотникова çавăн пекех Олимпиадăри çĕнтерĕве Раççей чемпионатĕнчипе танлаштарнă.

– Чемпионатра пĕрремĕш хут выляса илсен ун чухне те малтанах ĕненмерĕм. Паянхи пекех. Малашлăх планĕсем те çукчĕ-ха ун чухне. Акă 2010 çулта хĕрсене Олимпиадăна суйлама пуçларĕç. Манăн та Вăйăсене хутшăнас кăмăл çуралчĕ. Унта лекесси хăех – пысăк ĕмĕтчĕ, çĕнтересси вара – фантастика шайĕнчен!



Юлия Липницкая тавра çуралнă шăв-шава хăлхана чикменнине палăртнă фигуристка.

– Нимĕн те вулас-итлес мар тесе тăрăшатăп. Маншăн эпĕ хам кăна пур, хампа кăна кĕрешетĕп. Команда турнирне хутшăнманнине пула хама каларăм: "Пĕччен ярăнса медале тивĕçетĕпех".

Ĕмĕтре "ылтăн" çапах та пулнине пытарман чемпионка. Хăйшĕн пăшăрханнисене пурне те тав тунă. Çавăн пекех хăйĕн пур тренерне, наставникне, хореографне палăртнă.

– Тĕрĕссипе, пĕтĕм чунчĕререн турра тав тăватăп, вăл мана паян чемпионка пулма пулăшрĕ. Эпĕ ăна питĕ ĕненетĕп. Манăн çитĕнÿ – унăн ĕçĕ! – палăртнă Сотникова.

### Танлаштарса пăхар-ха

Олимпиада тавра шăв-шав часах лăпланмĕ-ха /тен, кĕçвĕç пуçланмалли Паралимпиада тимлĕхе туртса илĕ?/. Интернет тĕнчи тÿрех кĕрлеме пуçларĕ: мĕншĕн – Сотникова? Судьясем, ахăртнех, ăна балсем хушса пачĕç... Ытларах, паллах, Анăç чăрсăрланчĕ. Çав хушăрах, тĕлĕнмелле те, хамăрăннисем те кĕвĕçĕвне ниçта чикеймерĕç. Конкурентkинчен çÿлерех сикрĕ-и? Мĕнех вара? Вĕсем мĕн, пăр çине сикме тухаççĕ-им?

Тĕпелте пăхса ларса хак пама çăмăл. Специалистсене сăмах парар-ха. /Тепĕр тесен, судьясем балсен пуххине пĕлтернĕ хыççăнах Аделина Сотниковăпа Ким Ен А ярăннине танлаштарса кăтартрĕç. Пирĕн ентешĕн программи кăткăсрах пулни специалист комментарийĕсĕрех аван курăнчĕ/.

**Адам Лейб /АПШ тренерĕ/** "Нью-Йорк Таймс" хаçата панă интервьюра икĕ спортсменка ярăннине танлаштарса çапла каланă:

– Сотникова иккĕллĕ сикес енĕпе чи кăткăс комбинаци суйласа илнĕ. Вăл çÿллĕрех сикрĕ тата сывлăшра ытларах тытăнса тăчĕ. Çакăншăн ăна 10% хушса пачĕç. Ким Ен А вара чи çăмăллине суйланă. Сотниковăн тепĕр икĕ элеменчĕ кăткăслăх енĕпе тăваттăмĕш шайриччĕ, Кимăн – виççĕмĕш. Çак енсемпе выляса ячĕ те Ким Сотниковăна. Вырăс спортсменки вăрварлăхĕпе, хăвăртлăхĕпе пысăк хака тивĕçрĕ.

**Виталий Мутко, РФ спорт министрĕ:**

– Ку медале кĕтменччĕ! Аделина чи çивĕч хĕрÿ тупăшура çĕнтерчĕ, маттур! Команда турнирĕ лекейменнишĕн Аделина питĕ пăшăрханнине пĕлетĕп. Анчах та вăл акă пĕччен ярăнса чи пысăк кăтартупа палăрчĕ.

**Татьяна Тарасова, тренер:**

– Аделина пĕрремĕш хут çакăн пек ярăнчĕ! Вăл хăйне хăй çĕнтерчĕ. Ăна командăна кĕртмерĕç, вăл Мускавра пĕччене юлчĕ. Ку – йывăр тĕрĕслев. Вăл çапах та йывăрлăха парăнмарĕ.

### Пĕрремĕш хут чуп тумасть...

Çак кунсенче Олимп чемпионĕсем Раççей Президенчĕпе Путинпа тĕл пулчĕç. Çĕр-шыв ертÿçи çĕнтерÿçĕсене тĕрлĕ наградăпа хавхалантарчĕ. Аделина Сотниковăна В.Путин Туслăх орденĕпе чысларĕ. Халĕ чемпион титулĕсĕр тата орденсăр пуçне спортсменка пухмачĕнче – "РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ" хисеплĕ ят та пур.

...– Иртĕр, иртĕр, – чĕнет чемпионсене Раççей наци комитечĕн ертÿçи Александр Жуков. – Шампански тытăр!

Сочире иртнĕ Олимпиада чемпионĕсемпе призерĕсем, тин кăна патшалăх наградисене тивĕçнĕскерсем, хăйсене çирĕп тыткалама тăрăшаççĕ пулин те пăлханнине пытараймаççĕ. "Атте ячĕпе мар, "эсир" тесе чĕннине те ниепле те хăнăхаймастăп", – тет Юлия Липницкая. Альберт Демченко орденне ниçта хума пĕлмест. Антон Шипулин та медальсĕрех. "Мĕншĕн – медальсĕр? Акă вăл, – туртса кăларать хайхине кĕсйинчен. – Çакса ярасшăнччĕ те, сăпайсăр пек туйăнчĕ..." Çак вăхăтра спортсменсемпе тренерсене пурте пĕрле сăн ÿкерĕнме чĕнчĕç. Фигуристкăсене варрине тăратрĕç, биатлонистсем урайнех ларчĕç. Виктор Ана, ыттисен çурăмĕ хыçне пытанма хăтланнăскерне, мала тĕксе кăларчĕç.

Кăшт пушансан Аделина Сотниковăпа калаçса илтĕмĕр.

– Çĕнтернине пĕлсен макăрса янине пурте куртăмăр...

– Манпа ку – пĕрремĕш хут! Эпĕ ку старт патне питĕ вăрах пытăм. Икĕ çул хама алла илеймерĕм. Психологи тĕлĕшĕнчен кăткăслăхсем сиксе тухрĕç. Шăпах Олимпиадăра вăя тĕрĕс çулпа яма пултартăм.

– Президент орден панă чух сире чуп тумасăр чăтаймарĕ...

– Вăл мана пĕрремĕш хут мар ĕнтĕ чуп тăвать! 2009 çулта пулнăччĕ кун пекки! Ун чухне Спартакиада хыççăн çакăн евĕр тĕл пулу иртнĕччĕ. Эпĕ Президентпа сăн ÿкерĕнмешкĕн ирĕк ыйтрăм. Килĕшрĕç. Вăт çавăн чухне чуп турĕ те вăл мана! Мĕн тери телейлĕ туйнăччĕ эпĕ хама! – Аделина савăннипе ташша яманни кăна. – Вăл мана ас тунă пек туйăнать.

– Сирĕн, апла, Президентпа лайăх хутшăнусем йĕркеленеççĕ...

– Çапла-тăр, – кулать Сотникова.

– Паян мĕн туйрăр?

– Чĕре кĕçех тухса таратчĕ. Президента пĕрремĕш кăна курмастăп ĕнтĕ, çапах та питĕ пăлхантăм.

ХУШСА ÇЫРНИ. Раççей Президенчĕ Владимир Путин çĕр-шыври журналистсемпе калаçнă май хăй Аделина Сотниковăна ас тунине кăна мар, пилĕк çул каялла мĕн калаçнине те манманнине пĕлтерчĕ: "Вăл ун чухнех мана хăй пилĕк çултан Олимп чемпионки пуласине каланăччĕ. Сăмахне тытрĕ..."

**"Комсомольская правда", "Спорт-экспресс.ру", "Советский спорт" материалĕсем тăрăх Маргарита ИЛЬИНА хатĕрленĕ.**

# Саламлатпăр



*Юратнă аннене, кукамая, асаннене, тăхлача – Шупашкар районĕнчи Вăрăмту ялĕнче пурăнакан Неля Самойловна МОЧАЛОВĂНА – 75 çулхи юбилейпе ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм та телейлĕ кун-çул, çирĕп сывлăх, çемье тăнăçлăхĕ, ăнăçу сунатпăр.*

*Тулăх пултăр пурнăç*
*сан ялан,*
*Сывлăх ан хавшатăр нихăçан.*
*Ыр сунатпăр сана кăмăлтан,*
*Эсĕ хаклă пире ылтăнран.*

*Хĕрĕ, ывăлĕ, кĕрĕвĕ, мăнукĕсем,*
*кĕçĕн мăнукĕсем.*

## И-ХИ-ХИК

**Чи çирĕп хутшăнусем хĕлле йĕркеленеççĕ. Эсир, темĕн хулăмăш çи-пуç тăхăннăскерсем, пуçа калпакпа хупланăскерсем, хĕп-хĕрлĕ сăмсаллăскерсем, пĕр-пĕрне килĕшрĕр тĕк нимĕн чухлĕ те ан иккĕленĕр: ку – юрату...**

* * *

**Виççĕмĕш кун çумăр çăвать... Арăмăн депресси пуçланнă – пĕр вĕçĕм чӳречерен пăхать. Енчен те çумăр ыран та çума чарăнмасан арăма киле кĕртмех тивет ахăр...**

* * *

**“Эсир миçе çул ĕнтĕ пĕрле пурăнатăр, мĕншĕн халĕ те туй тумастăр?”, “Пĕрлешнĕренпе миçе çул иртрĕ ĕнтĕ, мĕншĕн халĕ те ача тумастăр?”, “Асли тăвата çула çитнĕ ĕнтĕ, иккĕмĕшне мĕншĕн çуратмастăр?” Çакăн пек ыйтса халтан яракансене питĕ калас килет: “Миçе çул ĕнтĕ канăç курмастăр, мĕншĕн хăвăр пурнăçпа пурăнмастăр?”**

* * *

**– Вовочка, эсĕ киле панă ĕçсене туман, çывăрма кĕрсе выртнă. Мĕншĕн?**

**– Асанне каларĕ: “Мĕн чухлĕ сахалрах пĕлетĕн – çавăн чухлĕ лăпкăрах çывăратăн”.**

* * *

**Арăмĕ ирхине ĕçе кайнă чух упăшки валли хут çырса хăварать:**

**– Вовочка, каçхине ачана садикрен илме ан ман. *Хушса çырни.* Вăл сана хăех палласа илет.**

* * *

**– Йăлт пăрахрăм: ĕçме те, туртма та... арăма та...**

**– Арăмна мĕншĕн тата?**

**– Телей ытла нумай йăтăнса аннине чăтаймасран хăрарăм...**

* * *

**– Алло! Ку йăлтах куракан, малашлăха калакан Антонина-и?**

**– Çапла, Сергей Иванович!**

**– Анчах та эпĕ Сергей Иванович мар.**

**– Пĕлетĕп.**

* * *

**– Хаклăскерĕм, – шăнкăравлать арçын арăмĕ патне. – Пирĕн чей ăçта-ши?**

**– Ах, килте мĕн ăçта выртнине çак ытла та нимĕн те пĕлмест вара, – мăкăртатать хĕрарăм. – Чей аптечкăра, “тăвар” тесе çырса хунă какао савăтĕнче.**

* * *

**– Мĕн телефона хăвăрт тытмастăн?**

**– Балкон çинче чĕлĕм туртрăм.**

**– Хĕрĕх минут-и?**

**– Çапăçу пăхрăм тата...**

**– Оп-па! Мĕнле çапăçу?**

**– Иккĕн пĕр-пĕрне ярса илнĕ те кăшкăраççĕ кăна.**

**– Мĕн тесе?**

**– Мяу-у-у-у! Мяу-у-у-у-у!!!**

* * *

**– Ăмăрт кайăкăм, урăх утаймастăп, ывăнтăм, икĕ сехет канмастпăр ĕнтĕ...**

**– Чăт ĕнтĕ, чĕкеçĕм, нумаях юлмарĕ.**

**– Пултараймастăп! Кутамкка çакки касать, хĕвел пĕçертет, пушмак урана хĕсет!**

**– Мĕн туса пулăшам ĕнтĕ сана, юратăвăм?**

**– Тен, кутамккаран тухатăн?**

* * *

**Кардиолог патĕнче:**

**– Сидоров, эсир кунне миçе кĕленче сăра ĕçетĕр?**

**– Тăваттă.**

**– Мĕнле – тăваттă? Эпĕ сире иккĕ кăна ĕçме юрать терĕм вĕт-ха.**

**– Тепĕр иккĕшне терапевт ирĕк пачĕ.**





## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### П Р О Д А Ю

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реальные низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу, песок, керамзит, щебень,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

### П Р О Д А Ю

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**99.Автоматические ворота, видеонаблюдение.** Т. 89278636398.

**115.Наркология. Трезвая жизнь.** Т. 8-902-663-20-80.

*Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т. 8-937-014-49-97.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

### РАБОТА

**100.Требуются монолитчики.** Т. 89276678272.

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 89250022238.


# Сăмах каçмăш

**Владислав ПЛАТОНОВ /Шупашкар районĕ/ хатĕрленĕ**



**СЫЛТĂМАЛЛА.** 5. Чăваш поэчĕ Валентин ... . 8. Тăмпа тислĕк хутăштарса çăрнă кирпĕч. 9. Кашкăрпа каварлаш та ...на авăрла. 10. Тыр-пул упрамалли хуралтă. 11. Вутă хумалли вырăн.13. Асамат кĕперĕн пĕр тĕсĕ. 16. Çав ӳсен-тăрантан сӳс яваççĕ. 17. ...лă кĕпер. 18. Пахчари ... ути. 20. Кӳкеçри «Бичурин тата паянхи ...» музей. 21. ... хуртан хăраман. 26. Пуйăс – ... çул транспорчĕ. 27. Булка. 28. Çав турра пуç çапма Ишекелле каймалла. 29. Сурăх кĕтӳçĕ. 30. Ши! пи! каякан культура.

**АЯЛАЛЛА.** 1. Тĕп артист та, сигарет та. 2. Чăваш Ен хули. 3. Пакăлти хĕрарăма çав кайăкпа танлаштараççĕ. 4. Аш-пăш. 6. «Имшер» сăмах антонимĕ. 7. Шыв сиккиллĕ юхан шыв. 12. Çăпата хуçнă чух усă курмалли хатĕр. 13. Ăна çын аллипе туртма хушмаççĕ. 14. ... айĕнче шăши вилмен. 15. Шурлăхра пурăнакан вăрăм ураллă кайăк. 19. В.Ленин ӳплере пытанса пурăннă поселок. 20. ... сакки сарлака. 22. Кăмпа пухмалли савăт. 23. Арçыннăн пичĕ çинче ӳсет вăл. 24. Кĕтӳ шăвармалли вырăн. 25. Çуркунне кунтăкран вăрлăх сапакан çын.


« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII

ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, “Чăваш хĕрарăмĕ”
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:
55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@chtts.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 9201. Заказ 728.